им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Март 18 юнкун № 57 (8966)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ертсе пынипе эпир коммунизм çулĕпе çирĕппĕн малалла утатпăр!

Рабочисем, колхозниксем, интеллигенци, пирĕн çĕршыври пĕтĕм ĕççыннисем СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ йышăннă законсемпе постановленисене хĕрÿллĕн ырлаççĕ.

ПАРТИ, ПРАВИТЕЛЬСТВО ТАТА СОВЕТ ХАЛĂХĔ ТАЧĂ ПĔТĔÇСЕ ТĂРАÇÇĔ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ хăйĕн мартăн 15-мĕшĕнче пулнă тăваттăмĕш сессийĕнче, депутатсем пурте пĕр шухăшлă пулнипе, çĕршыв пурнăçне пĕр чăрмавсăр тата тĕрĕс ертсе пыма май паракан решенисем йышăнчĕ. СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ пулма К. Е. Ворошилов юлташа суйлана. ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ пулма Г. М. Маленков юлташа уйăрса лартнă. Верховнăй Совет СССР Правительстви—СССР Министрĕсен Совечĕн составне çирĕплетнĕ. СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕсем пулма Л. П. Берия, В. М. Молотов, Н. А. Булганин тата Л. М. Каганович юлташсене, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ пулма А. И. Микоян юлташа çирĕплетнĕ.

Пурте пĕлеççĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕн, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕн мартăн 6-мĕшĕнче пулнă пĕрлехи ларăвĕ йышăннă постановленире: руководствăн питĕ пĕтĕçуллĕ пулни кирлĕ, нимĕнле йĕркесĕрлĕх те тата паника та пулмалла мар тăвас пулать, çапла вара пирĕн партипе правительство туса хатĕрленĕ политикăна хамăр çĕршывăн шалти ĕçĕсем енĕпе те, тĕнчери ĕçсем енĕпе те ăнăçлă пурнăçа кĕртсе пымалла пултăр, тесе каланă. Пирĕн руководство вăйĕ вăл коллективлă ĕçлениичен, пĕтĕçуллĕ пулниичен тата пĕр шухăшлă пулниичен килнине асра тытса, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕ государствăпа хуçалăх руководствине малалла лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерме кирлĕ тесе йышăнчĕç.

СССР Верховнăй Совечĕ—пирĕн çĕршыври государство влаçĕн аслă органĕ—хăйĕн тăваттăмĕш сессийĕнче Конституци тăрăх пăхса тухмалли ыйтусене пăхса тухрĕ тата мероприятисене законлă вăй пачĕ. Верховнăй Совет, пурте пĕр саслă пулса, министерствăсене çĕнĕлле йĕркелесси çинчен закон йышăнчĕ. Хальхи министерствăсене пысăклатас тĕлĕшпе, хуçалăхăн, культурăн, управленин пĕр йышши отраслĕсене ертсе пырассине пĕр министерствăра пĕрлештерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнма паянччченех вăхăт çитнĕччĕ. Ку мерăсем пирки пирĕн партире тата правительствăра Сталин юлташ пурăннă чухнех, унпа пĕрле нумай вăхăт хушши шухăшланă. Халĕ вара, пирĕн çĕршыв йывăр çухату тÿснĕ пирки, государствăпа хуçалăх ĕçĕсене ертсе пырассине малалла лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пурнăçлассине хăвăртлатнă. Пирĕн министерствăсене пысăклатас ĕçе ăнăçлă туса ирттерме, вĕсене пĕрлештернипе пулса тăракан лайăх майсемпе пĕтĕмпех усă курма мĕн кирли пурте пур, мĕншĕн тесен пирĕн лайăх кадрсем ÿссе çитĕннĕ, вĕсем пуян опыт туяннă, вĕсем халĕ ĕнтĕ пысăклатнă министерствăсене ăнăçлă ертсе пыма пултараççĕ. Государствăпа хуçалăх руководствине лайăхлатмалли мерăсене пурнăçлани хамăр çĕршыв умĕнче тăракан историллĕ задачăсене тата ăнăçлăрах пурнăçлама лайăх условисем туса парать. Çак задачăсем,—тесе каларĕç мартăн 9-мĕшĕнче хурлăхлă митингра каланă сăмахсенче Г. М. Маленков, Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсем,—хамăрăн нумай нациллĕ социализмла аслă государствăна, Совет çĕршывĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене тата Тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне пур майсемпе те тĕреклетсе пырасси пулать. Социализмла промышленноçпа колхозсен хуçалăхне мĕнпур майсемпе аталантарса пымалла, культура пуянлăхне ÿстермелле, рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, пĕтĕм совет çыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатса пымалла.

Ленин соратникĕ, унăн ĕçне генилле туса пынă аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ пирĕнтен уйрăлса кайни мĕнпур совет çыннисене совет халăхĕ умĕнче тăракан питĕ пысăк задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе пысăкрах вăй хурса ĕçлеме, коммунизм обществи тăвас, социализмлă Тăван çĕршывăн хăватне тата оборона пултарулăхне ÿстерес ĕçе ытларах вăй хума хушать. Пирĕн çул уççăн палăрса тăрать, çак çула И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенийĕнчи идейăсем тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем çутатса тăраççĕ.

Коммунистсен партийĕ, рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсем Совет Союзĕн правительстви умĕнче тĕнчери кăткăс лару-тăрура хамăр çĕршывăн тулашри политикине ертсе пырас енĕпе тата ССР Союзĕнчи халăхсене пысăк та паттăр кĕрешÿре—коммунизм обществи тăвассишĕн кĕрешÿре ĕçе ертсе пырас енĕпе те питĕ пысăк задачăсем тăнине лайăх пĕлеççĕ.

Совет çыннисем çакна çирĕп шанса тăраççĕ: ССР Союзĕн правительстви, ăна аслă Сталинăн шанчăклă ученикĕсемпе соратникĕсем ертсе пынипе, партипе правительство туса хатĕрленĕ политикăна ăнăçлă пурнăçламалла тăвĕ. Çакăн пек çирĕп шанчăк Верховнăй Советăн тăваттăмĕш сессийĕн ĕçĕнче уççăн палăрчĕ, сесси ССР Союзĕнчи халăхсем пурте Коммунистсен партийĕ тавра, Центральнăй Комитетпа Совет правительстви тавра çирĕп пĕтĕçсе тăнине кăтартса пачĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ совет халăхĕ хăйĕн тăван Коммунистсен партине вĕçĕмсĕр шанса тăнине, хĕрÿллĕн юратнине тата тепĕр хут кăтартса пачĕ. Ĕççыннисем çакна пĕлеççĕ: халăх интересĕсемшĕн тăрăшса ĕçлесси партин мĕнпур ĕçĕнче чи аслă закон пулса тăрать. Совет çыннисем парти политикине—ĕççыннисен тĕп интересĕсемпе килĕшсе тăракан, советлă Тăван çĕршыв вăй-хăватне малалла ÿстерме май паракан политикăна ырлаççĕ тата пурнăçласа пыраççĕ. Парти политики тĕрĕс пулнине социализмшăн вуншар çул хушшинчи кĕрешÿре тĕрĕсленĕ. Çак политикăна хавхалланса, Совет Союзĕнчи халăхсем парти ертсе пынипе коммунизм строительствинчи çĕнĕ çитĕнÿсем патне шанчăклăн малалла утаççĕ.

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ сессире çапла каларĕ: правительство хăйĕн пĕтĕм ĕçĕнче тулашри ĕçсем енĕпе тата шалти ĕçсем енĕпе те парти туса хатĕрленĕ политикăна çирĕппĕн пурнăçласа пырĕ. Шалти политика енĕпе Совет правительстви малашне те рабочи класпа колхоз хресченĕсен çирĕп союзне тĕреклетсе пырĕ, хамăр çĕршыври халăхсем хушшинчи туслăха тĕреклетĕ, социализмла государствăн оборона хăватне пур майсемпе те тĕреклетсе пырĕ. Халăх ырлăхĕшĕн, унăн материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене çителĕклипех тивĕçтерсе пырассишĕн, хамăрăн социализмлă Тăван çĕршыва малалла чечеклентерессишĕн тăрăшасси правительствăшăн закон пулса тăрать.

Совет правительствин тулашри политики çĕнĕ вăрçă пулмалла мар тăвасси, тĕнчери мĕнпур çĕршывсемпе мирлĕ пурăнмалла тăвасси пулать. Совет правительстви, — кун çинчен Верховнăй Совет сессийĕнче тата тепĕр хут каланă,— пурнăçра тĕрĕсленнĕ политикăна — мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес, Совет Союзĕн оборонипе хăрушсăрлăхне туса хурас политикăна, мĕнпур çĕршывсемпе килĕштерсе ĕçлесе пурăнас, вĕсемпе пĕр-пĕрин интересĕсене хисепленĕ никĕс çинче ĕçлĕ çыхăнусене аталантарас политикăна яланах çирĕппĕн пурнăçласа пырĕ. Пирĕн правительство малашне те аслă Китай халăхĕпе, халăх демократиллĕ çĕршывсенчи пур халăхсемпе те политика тата экономика енĕпе тачă çыхăнса килĕштерсе ĕçлессине, тăванла туслă тата пĕр шухăш-кăмăллă пурăнас çыхăнусене тĕреклетес ĕçе туса пырĕ.

Совет правительстви: хальхи вăхăтра интересленекен çĕршывсем пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă тăрăх мирлĕ йĕркепе татса пама май килмен тавлашуллă ыйтусем е татса паман ыйтусем çук, тесе пĕлтерчĕ. Ку вăл эпир мĕнпур государствăсемпе, вăл шутра эпир Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе çыхăну тытас ыйтăва та тивет. Мире сыхласа хăварма шутлакан государствăсем хальхи вăхăтра та, малашне те Совет Союзĕн мирлĕ çирĕп политикине шанса тăма пултараççĕ. Совет правительстви çакăн пек пĕлтернине совет халăхĕ, мире юратакан халăхсем пурте ырласа йышăнчĕç.

Совет халăхĕ, хăйĕн пысăк вăйĕсем çине çирĕппĕн шанса тăрса, коммунизм строительствин аслă ĕçне туса пырать. Çак йывăр кунсенче пирĕн Коммунистсен партийĕ, унăн хурçă пек çирĕп пĕрлĕхĕ, вăл ĕççыннисен массисемпе çирĕп çыхăнса тăни совет халăхĕн хăватлă та çирĕп тата шанчăклă тĕрекĕ пулни уйрăмах уççăн курăнать. Парти ертсе пынипе пирĕн халăх хăй пĕрлĕхлĕ те пĕтĕçуллĕ пулнине, çирĕп хăватлă та сыхă пулнине кăтартать, хамăр çĕршыва коммунизм тăвас ĕçре пысăкрах хăватпа ĕçлет.

Пирĕн хăватлă Тăван çĕршыв хăйĕн вăйĕсем чечекленсе пынă вăхăтра пурăнать, çĕнĕ çитĕнÿсем патне малалла пырать. Пирĕн Совет государствин хăвачĕ, совет халăхĕн моральлĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ нихçанхиичен пысăкрах тата çирĕпрех. Совет обществи малалла кайса пырассине чарса лартма пултаракан вăйсем тĕнчере çук.

Парти, правительство тата совет халăхĕ, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен тăванла çемйи тачă пĕтĕçсе тăнипе аслă та хăватлă советлă социализмлă держава коммунизм çулĕпе малалла кайса пырать. Ку вăл пирĕн иксĕлми вăй-хăватăн çăлкуçĕ, Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçĕ пĕтĕмпех çĕнтерÿ тăвассин шанчăкĕ пулса тăрать.

(«Правда» хаçатăн 1953 çулхи мартăн 17-мĕшĕнчи умстатьи).

СССР Верховнăй Совечĕ йышăннă законсемпе постановленисем

СССР Конституцийĕн (Тĕп законĕн) 70, 77 тата 78-мĕш статьисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен йышăннă

ЗАКОН

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ **çапла йышăнать:**

«СССР министерствисене çĕнĕлле йĕркелесси çинчен» йышăннă Закон тăрăх, СССР Конституцийĕн 70, 77 тата 78-мĕш статьисене кирлĕ пек улшăнусемпе хушусем кĕртсе, çак статьясене çапла çырса хурас:

«70 статья. СССР Министрĕсен Советне СССР Верховнăй Совечĕ çак составпа туса хурать:

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ;

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕсем;

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕсем;

СССР министрĕсем;

СССР Министрĕсен Совечĕн Государство план комитечĕн председателĕ;

СССР Министрĕсен Совечĕн Строительство тĕлĕшпе ĕçлекен Государство комитечĕн председателĕ».

«77 статья. Пĕтĕм союзлă Министерствăсен шутне çак министерствăсем кĕреççĕ:

Çĕр кăмрăк промышленность;
Нефть промышленность;
Металлурги промышленность;
Хими промышленность;
Машиностроени;
Транспортпа йывăр машиностроени;
Электростанцисемпе электропромышленность;
Оборона промышленность;
Строительство;
Сул-йĕр;
Çыхăну;
Тинĕспе юханшыв флот».

«78 статья. Союзлă-республикăллă Министерствăсен шутне çак министерствăсем кĕреççĕ:

Шалти ĕçсен;
Ют çĕршыв ĕçĕсен;
Оборона;
Шалти тата тулашри суту-илÿ;
Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев;
Культура;
Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность;
Строительство материалĕсем тăвакан промышленность;
Вăрманпа хут промышленность;
Финанс;
Сывлăх;
Юстици;
Государство контроль».

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль.
1953 çулхи мартăн 15-мĕшĕ.

В. В. Кузнецов юлташа СССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕн ĕçĕсенчен хăтарасси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ **çапла йышăнать:**

Василий Васильевич **Кузнецов** юлташа, ăна СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ пулма уйăрса лартнă май, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕн ĕçĕсенчен хăтарас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи мартăн 15-мĕшĕ.

А. А. Андреев юлташа СССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕ пулма суйласси çинчен

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕ **çапла йышăнать:**

Андрей Андреевич **Андреев** юлташа СССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕ пулма суйлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи мартăн 15-мĕшĕ.

СССР Конституцийĕн 70, 77 тата 78-мĕш статьисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. М. Пегов юлташ тунă доклад

Депутат юлташсем!

СССР Верховнăй Совечĕ СССР Правительство составĕнче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕсене çирĕплетрĕ. Çак решенипе СССР Конституцийĕн СССР Министрĕсен Совечĕн составне палăртакан 70-мĕш статьине тивĕçлĕ улшăну кĕртме кирли тухса тăрать. Кунсăр пуçне тата хăшпĕр комитетсене пĕтернĕ май çак статьяна улшăнусем кĕртни кирлĕ, мĕншĕн тесен вăл комитетсен председателĕсем халиччен СССР Министрĕсен Совечĕн составне кĕнĕ.

Çакна май СССР Конституцийĕн 70-мĕш статьине çакăн пек çырса хума сĕнÿ пур:

«70 статья. СССР Министрĕсен Советне СССР Верховнăй Совечĕ çак составпа туса хурать:

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ;

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕрремĕш заместителĕсем;

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕсем;

СССР министрĕсем;

СССР Министрĕсен Совечĕн Государство план комитечĕн председателĕ;

СССР Министрĕсен Совечĕн Строительство тĕлĕшпе ĕçлекен Государство комитечĕн председателĕ».

Çавăн пекех тата СССР Конституцийĕн 77-мĕшпе 78-мĕш статьисене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушусем кĕртмелле, вăл статьясенче СССР Верховнăй Совечĕн çак сессийĕ «СССР министерствисене çĕнĕлле йĕркелесси çинчен» йышăннă Законран тухса тăракан государство тытăмĕн органĕсен системинчи улшăнусене палăртмалла.

Çакна май СССР Конституцийĕн ССР Союзĕнчи пĕтĕм союзри министерствисен йышĕ çинчен калакан 77-мĕш статьяна çакăн пек çырса хума сĕнÿ пур:

«77 статья. Пĕтĕм Союзри Министерствăсен шутне çак министерствăсем кĕреççĕ:

Çĕр кăмрăк промышленность;
Нефть промышленность;
Металлурги промышленность;
Хими промышленность;
Машиностроени;
Транспортпа йывăр машиностроени;
Электростанцисемпе электропромышленность;
Оборона промышленность;
Строительство;
Сул-йĕр;
Çыхăну;
Тинĕспе юханшыв флот министерстви».

СССР Конституцийĕн ССР Союзĕнчи союзлă-республикăллă министерствăсен йышĕ çинчен калакан 78-мĕш статьяна çапла çырса хума сĕнÿ пур:

«78 статья. Союзлă-республикăллă Министерствăсен шутне çак министерствăсем кĕреççĕ:

Шалти ĕçсен;
Ют çĕршыв ĕçĕсен;
Оборона;
Шалти тата тулашри суту-илÿ;
Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев;
Культура;
Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность;
Строительство материалĕсем тăвакан промышленность;
Вăрманпа хут промышленность;
Финанс;
Сывлăх;
Юстици;
Государство контроль министерстви».

Çакăнта каланисем тăрăх «СССР Конституцийĕн (Тĕп законĕн) 70, 77 тата 78-мĕш статьисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен Закон йышăнма тата çапла майпа СССР Конституцийĕн çав статьисене СССР Верховнăй Совечĕ «СССР Министрĕсен Совечĕн составĕ çинчен» тата «СССР министерствисене çĕнĕлле йĕркелесси çинчен» йышăннă решенисемпе килĕшÿллĕ тума сĕнÿ тăрататăп.

Столицăри ĕççыннисем СССР Верховнăй Совет сессийĕн решенийĕсене чĕререн ырлаççĕ

Столицăри Сталински, Пролетарски, Свердловски, Фрунзенски, Краснопресненски, Октябрьски, Ждановски тата ытти районсенчи предприятисенче, учреждениесенче, шкулсенче агитаторсем СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕн материалĕсене вуласа параççĕ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем, вĕренекен çамрăксем сесси йышăннă законсемпе тата постановленисемпе гимлĕн паллашаççĕ. Сесси решенийĕсем çĕршыв пурнăçне тĕрĕс ертсе пыма май параççĕ.

Мартăн 16-мĕшĕнче Л. М. Каганович ячĕпе тăракан подшипниксем тăвакан пĕрремĕш завод цехĕсемпе пайĕсенче çĕршер агитаторсем калаçусем ирттернĕ. Завод коллективĕ çĕршыври государство влаçĕн аслă органĕ йышăннă пахă решенисене ырласа йышăннă.

Инструментальнăй цехра ĕçлекен шлифовщик-скоростник Жучков юлташ хăйĕн юлташĕсене чĕнсе çапла каланă:

— Сесси решенийĕсенче пирĕн Тăван çĕршывăн хăвачĕшĕн тăрăшни, совет çыннисен телейĕшĕн тăрăшни курăнса тăрать. Коммунизм строительствин пысăкран та пысăк задачисене ăнăçлăн пурнăçлас тесен, пирĕн ĕç тухăçлăхне ÿстермелле.

Жучков юлташ сменăри задание сахалтан та 300 процентран кая мар тултарма обязательство илнĕ, мĕнпур рабочисене хăй пек ĕçлеме чĕннĕ. Токарьсем — Морозов, Клишин тата ыттисем те продукци ытларах кăларма тата унăн пахалăхне лайăхлатма сăмах панă.

Сесси материалĕсене вуласа пĕтернĕ хыççăн «Свобода» фабрикăри слесарь Перевозников юлташ çапла каланă:

— СССР Верховнăй Совечĕн законĕсемпе постановленийĕсем пире Ленинпа Сталин хушса хăварнисене ăнăçлăн пурнăçлама пулăшаççĕ. Правительствăн çĕнĕ составĕ тулашри сталинла мир политикине—совет халăхĕ миршĕн тăрăшни çинче никĕсленсе тăракан политикăна тата çĕршыври сталинла политикăна—совет обществин пĕрмай ÿссе пыракан культурăллă тата материальнăй ыйтăвĕсене пурçинчен те тивĕçтерес, хамăр çĕршывра коммунизм тăвас тĕллев тытакан политикăна çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырассине пĕлтерет.

Столицăри ĕççыннисем Совет правительствин çĕнĕ составне чĕререн шанса тăни çинчен калаççĕ тата Совет Союзĕн хăватне малалла тĕреклетме, Сталин хушса хăварнă аслă ĕçсене пурнăçа кĕртме пулăшакан аслă мероприятисене ырлаççĕ. Сесси решенийĕсем совет халăхĕн пурнăçлă интересĕсене тивĕçтереççĕ. (ТАСС).

Бакури нефтяниксен сăмахĕ

БАКУ, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Хулари пиншер нефтяниксем СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕн материалĕсене радио тăрăх итленĕ. Нефть промыслисенчи, заводсенчи тата хулари ытти предприятисенчи производственниксем СССР Государство влаçĕн аслă органĕ йышăннă решенисене пурте пĕр шухăшлă пулса саламлаççĕ. Буденный ячĕпе тăракан нефть заводĕнчи Аббас Касумов оператор сменинчи рабочисем кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче сесси материалĕсемпе паллашнă.

— СССР Верховнăй Совет депутачĕсемпе пĕрле эпир пирĕн Тăван çĕршыв Правительствин çĕнĕ составне пĕтĕм чĕререн саламлатпăр,—тенĕ оператор Касумов юлташ.

Паян талăкри задание смена 119 процент тултарнă.

Вата нефтяник—Сталински районти 6-мĕш промысла мастерĕн помощникĕ Дуфулла Ширали çапла каланă:

— Совет Правительстви пирĕн çĕршыва, Ленинпа Сталин вĕрентнĕ пек, коммунизм тумалли çулпа çирĕппĕн ертсе пырĕ, тесе шанса тăратпăр. Эпир пурте çакна пĕлетпĕр: халăх ырлăхĕшĕн, çĕршывăн хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшасси, çĕршыва çĕнĕ хăватпа аталантарассишĕн тăрăшасси социализмлă государство правительствин çĕнĕ составĕшĕн закон пулса тăрать.

Баку нефтяникĕсемпе мĕнпур ĕççыннисем пирĕн социализмлă Тăван çĕршыва малалла тĕреклетме, çĕршыв оборонине вăйлатма тата ĕççыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатма пулăшакан решенисене чĕререн ырлаççĕ.

СССР Министрĕсен Советĕнчен

СССР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăннă: Чехословаки Республикин Президентне Клемент Готвальда пытарнă куна — мартăн 19-мĕшне траурлă кун тесе пĕлтерес, çак кун траурлă ялавсем кăларса çакмалла.

Тăван çĕршывăн вăйĕпе хăвачĕ çинчен калакан решенисем

АЛМА-АТА, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Казахстанри ĕççыннисем СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш съезчĕн материалĕсене радио тăрăх тимлĕн итленĕ. Заводсемпе фабрикăсенче, аслă шкулсенче, наука учрежденийĕсенче, МТС-семпе колхозсенче пур çĕрте те сесси решенийĕсене хапăл туса йышăнаççĕ. Рабочисемпе колхозниксем, инженерсемпе ученăйсем хамăр Тăван çĕршывăн хăвачĕпе оборона пултарулăхне малалла тĕреклетес тесе, пĕтĕм вăй-хăватпа ĕçлеме пулаççĕ.

Йывăр машиностроенин Алма-Атари завочĕн директорĕ Исалиев юлташ çапла каланă:

— Пирĕн завод коллективĕ СССР Верховнăй Совечĕ йышăннă паха постановленисене пысăк савăнăçпа йышăнса илчĕ. Çак решенисем Совет государствин вăйхăватне кăтартаççĕ. Министерствăсене пĕрлештерни промышленноçа ертсе пырассине лайăхлатать, вăл предприятисен ĕçĕнче лайăх сисĕнĕ. Совет çыннисем социализмлă промышленноçа — пирĕн çĕршывăн хăвачĕне тĕрекĕн никĕсĕ пулса тăракан социализмлă промышленноçа пур майсемпе те аталантарас тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлĕç. Эпир çакна пĕлетпĕр: Пирĕн Тăван çĕршыв çĕнĕ çитĕнÿсем патне пырать, пирĕн çĕршывра коммунизм обществи тума мĕн кирли пурте пур.

Киргизири шахтерсем стахановла ĕçлеççĕ

ТАШКУМЫР (Джалал-Абад облаçĕ). Киргизири Ташкумыр рудникĕнчи горняксем планран иртерсе çĕр кăмрăкĕ кăлараççĕ.

Г. М. Маленков, Л. П Берия тата В. М. Молотов юлташсем Хĕрлĕ площадьре аслă Сталинăн тупăкĕ умĕнче каланă сăмахсене вуланă хыççăн, малта пыракан «Капитальная» шахтăри çамрăксен бригадин бригадирĕ Салим Сафин çапла каланă:

— Планран иртерсе кăларнă кашни тонна çĕр кăмрăкĕ пирĕн Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетет, мир ĕçне пулăшать. Çакна эпир пĕлетпĕр. Пирĕн чи таса тивĕç вăл ытларах çĕр кăмрăкĕ кăларасси пулать тесе шутлатпăр.

Опытлă горняк Иван Кузьмин ертсе пыракан участокри пур бригадăсем те сменăн юлашки 1,5—2 сехечĕ хушшинче нормăран иртерсе çĕр кăмрăкĕ кăларнă.

Паян «Капитальная» шахта коллективĕ планран иртерсе 600 тонна ытла çĕр кăмрăкĕ кăларнă. «Северная» шахтăри горняксем те планран иртерсе кăмрăк кăлараççĕ. (ТАСС).

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн

УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи финанспа кредит системин работникĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен

(Юлашки. Пуçламăшĕ 56-мĕш номерте).

7. Финанс службин 2-мĕш рангри кĕçĕн советникне Леонид Петрович **Белорусова**—Госстрахăн Куславкка районĕнчи инспекцийĕн аслă бухгалтерне.

8. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Елизавета Васильевна **Богдановăна**—Çĕмĕрле районĕнчи финанс пайĕн аслă бухгалтерне.

9. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Иван Иванович **Борцова**—Госбанкăн Çĕмĕрлери уйрăмĕн аслă кассирне.

10. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Елизавета Ивановна **Бурашниковăна**—Етĕрне районĕнчи финанс пайĕн аслă инспекторне.

11. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Зиновий Иванович **Быкова**—Элĕк районĕнчи финанс пайĕн аслă бухгалтерне.

12. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Мария Александровна **Васильевăна**—Госбанкăн Канашри уйрăмĕн главнăй бухгалтер заместительне.

13. Финанс службин 1-мĕш рангри советникне Михаил Васильевич **Васильева**—республика финанс министерствин сектор начальникне.

14. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Василий Сергеевич **Вострова**—Госбанкăн Сĕнтĕрвăрринчи уйрăмĕн аслă кассирне.

15. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Наталия Сергеевна **Герасимовăна**—Канаш районĕнчи финанс пайĕн главнăй бухгалтерне.

16. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Нина Осиповна **Глуховăна**—Госбанкăн Çĕмĕрлери уйрăмĕн аслă инспекторне—группа руководительне.

17. Финанс службин 1-мĕш рангри советникне Павел Данилович **Данилова**—Октябрьски районĕнчи финанс пайĕн заведующине.

18. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Ольга Владимировна **Долговăна**—Госбанкăн Çĕмĕрлери уйрăмĕн аслă бухгалтерне.

19. Алексей Александрович **Зефирова**—республика финанс министерствин пай начальникне.

20. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Иван Иванович **Иванова**—Госбанкăн Советскинчи уйрăмĕн аслă инспекторне.

21. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Лидия Дмитриевна **Ивановăна**—Улатăр хулинчи финанс пайĕн аслă инспекторне.

22. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Трофим Игнатьевич **Игнатьева**—Госстрахăн Шăхасан районĕнчи инспекцийĕн инспекторне.

23. Финанс службин 2-мĕш рангри советникне Христина Федоровна **Игнатьевăна**—Канаш хулинчи финанс пайĕн аслă инспекторне.

24. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Григорий Яковлевич **Корчагина**—Госбанкăн Шăмăршăри уйрăмĕн главнăй бухгалтерне.

25. Алексей Романович **Куличева** — Госбанкăн Хĕрлĕ Чутайри уйрăмĕн управляющине.

26. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Татьяна Ивановна **Кураевăна**—Госбанкăн Çĕмĕрлери уйрăмĕн главнăй бухгалтерне.

27. Финанс службин 2-мĕш рангри кĕçĕн советникне Мария Ивановна **Листочкинăна**—Улатăр хулинчи 4424-мĕш номерлĕ тĕп перекет кассин аслă кассирне.

28. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Анастасия Ивановна **Магницкаяна**—Госбанкăн Шупашкар хулинчи уйрăмĕн главнăй бухгалтер заместительне.

29. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Виктор Николаевич **Матюнина**—Госстрахăн Улатăр районĕнчи инспекцийĕн аслă инспекторне.

30. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Елизавета Сергеевна **Михайловăна**—Канаш районĕн финанс пайĕн аслă бухгалтерне.

31. Финанс службин 2-мĕш рангри кĕçĕн советникне Марина Степановна **Никитинăна**—Комсомольски районĕнчи финанс пайĕн налог агентне.

32. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Александра Никифоровна **Никифоровăна**—Госбанкăн Вăрмарти уйрăмĕн главнăй бухгалтер заместительне.

33. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Иван Леонтьевич **Окина**—Çĕмĕрле районĕнчи финанс пайĕн аслă инспекторне.

34. Финанс службин 2-мĕш рангри кĕçĕн советникне Мария Филипповна **Оспопрививателевăна**—Улатăр хулинчи финанс пайĕн аслă бухгалтерне.

35. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Ксенофонт Александрович **Пакеянова**—Госбанкăн Улатăрти уйрăмĕн группа руководительне.

36. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Ольга Ивановна **Петровăна**—республика финанс министерствин инспекторне.

37. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Мария Петровна **Слепневăна**—Пăрачкав районĕнчи финанс пайĕн главнăй бухгалтерне.

38. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Мария Федоровна **Толстовăна**—Сĕнтĕр районĕнчи финанс пайĕн главнăй бухгалтерне.

39. Финанс службин 2-мĕш рангри кĕçĕн советникне Евдокия Тимофеевна **Тяботинăна**—республика финанс министерствин бухгалтерне.

40. Финанс службин 1-мĕш рангри кĕçĕн советникне Анна Егоровна **Ульяновăна**—Госбанкăн Улатăрти уйрăмĕн контролерне.

41. Финанс службин 3-мĕш рангри старши советникне Нина Игнатьевна **Федоровăна**—республика финанс министерствин пай начальникне.

42. Финанс службин советникне Алексей Харитонович **Харитонова**—Госбанкăн республикăри кантурĕн сектор начальникне.

43. Финанс службин 2-мĕш рангри кĕçĕн советникне София Михайловна **Шипуновăна**—Госбанкăн Сĕнтĕрвăрринчи уйрăмĕн кассирне.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1953 çулхи мартăн 3-мĕшĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Лекциллĕ пропагандăна лайăхлатассишĕн

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ совет халăхĕн, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх пурнăçĕнчи питĕ пысăк событи пулчĕ. Съезд йышăннă решенисем, Сталин юлташ съездра тухса каланă историллĕ сăмах тата унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ совет çыннисене социализмран майĕпен коммунизма куçассишĕн кĕрешме хавхалантарассĕ.

Çак пысăк задачăна татса парас ĕçре совет халăхне коммунизмла воспитани парасси пăлă выран йышăнса тăрать. Пирĕн Тăван çĕршыв умĕнче тăракан аслă задачăсем идеологиллĕ ĕçе пур майсемпе те вăйлатма, лайăхлатма, унăн витĕмлĕхне ÿстерме хушаççĕ.

Идеологиллĕ ĕçре лекциллĕ пропаганда пысăк выран йышăнать. Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем çинчен, Сталин юлташ съездăн юлашки ларăвĕнче тухса каланă историллĕ сăмах тата унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ çинчен ĕçсыннисене тĕплĕн ăнлантарса парасси хальхи вăхăтра парторганизацисем, докладчиксемпе лекторсем умĕнче тăракан тĕп задача пулать.

Юлашки вăхăтра коммунистсен политикăллă пĕлĕвĕ чылай ÿсрĕ, ĕçсыннисен анлă массисем те марксистла-ленинла теорипе ытларах интересленме пуçларĕç. Çакă вăл лекциллĕ пропаганда умне çĕнĕ те пысăкрах требованисем лартрĕ.

КПСС Калинино райкомĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă решенисене пурнăçласа, чылай паха ĕçсем туса ирттерчĕ. Çав ĕçсенчен пĕри вăл—лекциллĕ пропагандăна лайăхлатни пулать. Парти вĕренĕвĕн çулĕ пуçланиччен парти райкомĕ штатра тăман лекторсен ушкăнне турĕ. Лекторсене пурне те райком бюровĕнче çирĕплетнĕ.

Лекцисен пахалăхĕ пуринчен ытла лекторсен составĕ мĕнле пулнинчен килет, тесе кăтартса панă В. И. Ленин. Çак аслă кăтартăва асра тытса, КПСС райкомĕ лекторсем пулса ĕçлеме политика тĕлĕшпе лайăх хатĕрленсе çитнĕ тата пĕтĕмĕшле пĕлÿ çителĕклĕ илнĕ юлташсене çирĕплетме тăрăшрĕ. КПСС райкомĕн штатра тăман лекторсен ушкăнĕнче 14 çын шутланать. Парти райкомĕн секретарĕсене тата пропагандăпа агитаци пайĕнче ĕçлекенсене пурне те ку ĕçе хутшăнтарнă.

Лекторсем хушшинче вăтам шкулсемпе çичĕ çул вĕренмелли шкулсен директорĕсем тата учительсем 7 çын шутланаççĕ. Лекторсенчен ытларахăшĕ аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Вĕсем лекцисемпе докладсем туса парас ĕçе чылайранпа ĕнтĕ активлăн хутшăнаççĕ. И. Сергеев, И. Нарышкин, А. Попов, М. Емельянова тăлăт юлташсем ку тĕлĕшпе пилĕк е вунă çул хушши ĕçлеççĕ.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче те штатра тăман лекторсем пулса ĕçлеме лайăх хатĕрленсе çитнĕ юлташсене хутшăнтарнă. Анчах лекторсен ушкăнĕн ĕç планĕ пулман. Ĕçе кирлĕ пек тĕрĕслемен пирки лекциллĕ пропаганда тивĕçлипе пулса пырайман. Çак çитменлĕхсене пĕтерме эпир вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕсенчех мерăсем йышăнтăмăр.

Чи малтанах эпир ĕç планĕ турăмăр, унта хăш лекторăн мĕнле темăсемпе лекцисем хатĕрлемеллине палăртса хутăмăр. Ку плана пĕтĕм вĕренÿ çулĕ валли турăмăр. Ăна лекторсен ушкăнĕн ларăвĕнче сÿтсе явса çирĕплетнĕ.

Кунсăр пуçне, эпир кашни кварталтах ĕç планĕ тăватпăр. Ку плансенче лекторсен ушкăнĕн ларăвĕсене хăçан ирттермеллине, унта мĕнле лекци тезисĕсене сÿтсе явмаллине, çав лекцисене хăçан тата хăш пуçламăш парторганизацинче вуласа памаллине палăртса хуратпăр. Çапла вара, лекци тезисĕсене мĕнле темăпа тата хăш вăхăт тĕлне хатĕрлесе çитермелли, вĕсене хăçан сÿтсе явмалли тата ирттермелли малтанах паллă.

И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине тата партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсене вĕренме тытăннăранпа лекторсен ушкăнĕ хăйĕн ĕçне тĕпренех çĕнетсе урăхлатрĕ. Çав историллĕ произведенипе материалсене пропагандăлас тĕлĕшпе эпир план туса хатĕрлерĕмĕр, ăна лекторсен ушкăнĕн ларăвĕнче сÿтсе явса çирĕплетрĕмĕр.

Хальхи вăхăтра партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тăрăх пилĕк пуçламăш парторганизацире тата КПСС райкомĕн библиотекинче лекцисен циклне ирттерес ĕçе йĕркелерĕмĕр. Райком библиотекинче Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ тăрăх лекцисен циклне ирттеретпĕр.

Вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа КПСС райкомĕн штатра тăман лекторĕсем 36 лекци тезисĕсене çырса хатĕрленĕ, вĕсенчен 17 лекцине Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ тата партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем çинчен çырнă.

Пĕр-пĕр лекцие ирттериччен эпир яланах лекторсен ушкăнĕн ларăвĕнче сÿтсе яватпăр е хăшпĕр чухне лекторсен ушкăнĕн руководителĕ пăхса тухать. Лекци тезисĕсене сÿтсе явни çитменлĕхсене палăртма тата лекцисен пахалăхне лайăхлатма май парать.

Акă тĕслĕхсем. И. Нарышкин юлташ «Производствăлла хутшăнусем производительнăй вăйсен характерĕпе обязательно килĕшсе тăмалли çинчен» темăпа лекци çырса хатĕрлерĕ. Ку лекцие вăл, пĕтĕмĕшпе илсен, япăхах мар хатĕрленĕ. Анчах хăшпĕр çитменлĕхсем пулни те палăрчĕ. Сăмахран, кирек мĕнле революци те социальнăй никĕсĕ вăл производствăлла хутшăнусем производительнăй вăйсен характерĕпе килĕшменни пулса тăнине тĕплĕн кăтартман, капитализмла çĕршывсенче çар производстви ÿссе пынин, ССР Союзĕнче тата халăх демократи çĕршывĕсенче мирлĕ экономика вăйланнин сăлтавĕсене çутатса паман пулнă. Вăхăтра сÿтсе явни çак çитменлĕхсене пĕтерме май пачĕ.

Лекцисен тезисĕсене сÿтсе явнă вăхăтра уйрăмах çамрăк лекторсем пысăк пулăшу илеççĕ. Лекторсен ушкăнĕн пĕр ларăвĕнче çамрăк лекторăн С. Волков юлташăн «Российăри социал-демократиллĕ рабочи партине организацилени» темăпа çырнă лекцине сÿтсе ятрăмăр. Вара акă мĕн палăрчĕ: Волков юлташ парти историйĕнчи хăшпĕр фактсемпе событисене çиелтен çутатса панă, марксистла парти тăвас тĕлĕшпе Ленин тунă план çинчен кирлĕ пек тулли каламан, Ленин планне пурнăçлас ĕçре «Искра» хаçат мĕнле выран йышăнса тăнине кăтартса паман, ыйтусене ку чухнехи лару-тăрупа çыхăнтарман. Волков юлташ çак çитменлĕхсене пĕтерчĕ, лекцие тепĕр хут çырса хатĕрлерĕ.

Çутçанталăкпа обществăри явленисем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни тата вĕсем пĕр-пĕринчен килни çинчен Царицына юлташ хатĕрленĕ лекци текстне сÿтсе яврăмăр. Вăл хăшпĕр ыйтусене çителĕксĕр çутатса пани тата буржуалла теорисене критиклемени палăрчĕ.

Кăçал лекторсен ушкăнĕн ларăвĕсене çичĕ хут ирттернĕ, вĕсенче 13 лекци тезисĕсене сÿтсе явнă. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ çинчен çырнă 7 лекци текстне тишкĕрсе тухнă. Лекторсен ушкăнĕн ларăвĕсенче лекторсем пĕр-пĕрин ĕç опычĕпе паллашаççĕ.

Лекцисене сÿтсе явнисĕр пуçне эпир лекторсене пĕччĕшпĕрĕн те куллен пулăшу пама тăрăшатпăр, каласусем, консультацисем ирттеретпĕр. Сăмахран, Царицына юлташ «Хулапа ял хушшинчи уйрăмлăхсене пĕтересси тата çав паллăрах уйрăмлăхсене пĕтермелли майсем» темăпа лекци хатĕрленĕ чухне чылай йывăрлăхсемпе тĕл пулнă. Ăна пирĕн кирлĕ пулăшу памалла пулчĕ. Вара вăл хушнă ĕçе тивĕçлипех пурнăçларĕ.

КПСС райкомĕн библиотеки лекторсене кирлĕ кĕнекесем, тĕрлĕ фактсемпе цифрăсем тупса хурас тĕлĕшпе те пулăшу парать.

Штатра тăман лекторсем чылай ĕçсем туса ирттерчĕç. Марксистла-ленинла теорие вĕренекенсене пулăшма 152 лекци ирттернĕ (вĕсене 6.727 çын итленĕ). Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ çинчен 97 лекци пулнă.

Штатра тăман лекторсем юлашки вăхăтра пуçламăш парторганизацисенче ытларах пулма тытăнчĕç. Пуçламăш парторганизацисенче час-часах лекцисем пулаççĕ. Съезд йышăннă решенисем, Сталин юлташăн çĕнĕ произведенийĕ çинчен пулакан лекцисене ĕçсыннисем хаваспахса çÿреççĕ.

КПСС райкомĕн лекторĕсем хăйсен лекцийĕсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттерме тăрăшаççĕ. Анчах ку вăй хумасăр пулмасть: лекцие лайăх ирттерес тесен, пĕлÿсем пысăк пулни кирлĕ. Çавна шута илсе, пирĕн лекторсем хăйсем те съезд материалĕсене тата Сталин юлташăн произведенине вĕренес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ.

Лекторсенчен тăххăрăшĕ «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» произведенине харпăр хăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Пилĕк лектор Сталин юлташ произведенине вĕренес тĕлĕшпе КПСС райкомĕ çумĕнче организациленĕ семинара çÿрет. Сергеев, Нарышкин, Емельянова, Волков, Иванов юлташсем КПСС обкомĕ çумĕнче организациленĕ семинара кайса килчĕç. Нарышкинпа Дмитриев юлташсем Мускаври аслă шкулсенчи аспирантурăсенче, 3 çын Чăвашсен педагогика институтĕнче заочно вĕренеççĕ.

КПСС райкомĕн бюровĕ лекторсен ушкăнĕ мĕнле ĕçленипе куллен интересленет, лекторсенчен отчетсем итлет. Сăмахран, райком бюровĕ И. Нарышкин юлташ мĕнле ĕçлени çинчен отчет итлерĕ. Нарышкин юлташ лекцисен текстĕсене çырас умĕн марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене тепĕр хут тĕплĕн вуласа тухать, кирлĕ фактсене пухать, лекцисене ку чухнехи лару-тăрупа çыхăнтарать. Вăл итлекенсене умра тăракан политикăпа хуçалăх задачисем çинчен каласа парать. Райком бюровĕ унăн лайăх опытне ытти лекторсем хушшинче сарма кирлĕ тесе йышăнчĕ.

Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пур. Хăшпĕр юлташсем (сăмахран, Захаров, Емельянов, Царицына юлташсем) лекцисем сахал ирттереççĕ, вĕсен текстĕсене сÿтсе явас ĕçе кирлĕ пек хутшăнмаççĕ. Уйрăм лекторсем (Иванов, Волков юлташсем) хăш-хăш чухне лекцисене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çителĕксĕр ирттереççĕ.

Тепĕр çитменлĕх вăл — уйрăм лекторсен лекцийĕсем çинчен рецензисем çырас ĕçе йĕркелемени пулать.

И. ПРОКОПЬЕВ,
КПСС Калинински райкомĕн секретарĕ.

Район Совечĕн организациллĕ сессийĕ

МУРКАШ. Ĕçсыннисен депутачĕсен район Совечĕн тăваттăмĕш созыври пĕрремĕш организациллĕ сессийĕ пулса иртрĕ. Сессие вată депутат, халăха çутта кăларас тĕлĕшпе 50 çул ытла ĕçлекен учительница К. Тетерина юлташ уçрĕ.

Сесси мандат комиссийĕн отчетне итлерĕ. Выранти Советсен суйлавĕ районта пысăк çĕкленÿпе иртнĕ, ĕçсыннисем хăйсен политикăллă пысăк пĕтĕçÿлĕхне кăтартса панă. Районти Совета пурĕ 25 депутат суйланă. Вĕсем пурте коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсем.

Сесси районта çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе яврĕ. Сесси критикăпа самокритика анлăн саралнипе иртрĕ. Депутатсем райсовет исполкомĕн тата унăн пайĕсен ĕçĕнчи чылай çитменлĕхсене критиклерĕç.

— Район ялхуçалăх ĕçĕсемпе юлса пырать. Çураки валли вăрлăх хатĕрлесе çитермен. Хăшпĕр колхозсем халĕ те авăн çапса пĕтермен. Çакă вăл, чи малтанах, райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕ колхозсене начар ертсе пынинчен килчĕ,— терĕ депутат С. Федоров юлташ.

А. Лаврентьев депутат çапла калать:

— Райсовет исполкомĕн ялпа колхоз строительствин пайĕ выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене кашни колхозрах кирлĕ чухлĕ лартассишĕн тăрăшмарĕ. Суту-илÿ организацийĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ Анчах вĕсен ĕçне аванлатас тĕлĕшпе райсовет исполкомĕн суту-илÿ пайĕ мĕн те пулин туни курăнмасть.

— Районти ялхуçалăх пайĕ колхозсене пĕтĕмĕшле ертсе пынă, юлса пыракан колхозсемпе уйрăммăн интересленмен, — тет В. Ильин депутат.

— Колхозсен автопаркĕ çултан-çул вăйланса пырать. Иртнĕ çулта та çĕнĕ автомашинăсем нумай туяннă. Анчах вĕсемпе йĕркеллĕ усă курнине, мĕнле тыткаланине районта никам та тĕрĕслесе тăмасть,—терĕ А. Яриков депутат. Кунпа пĕрлех вăл колхозсене тĕрлĕрен заданисем панă чухне вĕсен çĕр лаптăкне тата ĕçне туртăм вăйне тĕрĕс шута илме кирлине кăтартса пачĕ.

Çавăн пекех депутатсем районти хуçалăхпа культура строительствине планлас ĕçе, благоустройство, халăх сывлăхне сыхлас, çулсемпе кĕперсем тăвас ĕçсене лайăхлатас, колхозсенчи ертсе пыракан кадрсене пĕлсе суйласа илсе, вĕсене тĕрĕс воспитани парас, çуракине хатĕрлессине вăйлатас тата ытти ĕçсем тĕлĕшпе те чылай кирлĕ наказсемпе сĕнÿсем пачĕç, наказсем мĕнле пурнăçланса пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăма хушса хăварчĕç.

Сесси райсовет исполкомĕн председателĕ пулма П. Петров депутата суйларĕ, исполком пайĕн заведующийĕсене тата яланхи комиссисен çĕнĕ составне çирĕплетрĕ.

(Хамăр корр.).

Совет Союзĕпе Болгари туслăхĕ

Пилĕк çул каялла, 1948 çулхи мартăн 18-мĕшĕнче, Мускавра Совет Союзĕпе Болгари Халăх Республики пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси, килĕштерсе ĕçлесси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор тунă. Çак договора тунă чухне икĕ çĕршыв пĕр-пĕрне хисеплессине никĕсе хунă. Ку договор Совет Союзĕпе Болгари хушшинчи туслă çыхăнусене малалла аталантарас тата тĕреклетес ĕçсемпе тунă пысăк ĕç, Европăра мире сыхласа хăварас енĕпе пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулчĕ.

«Договор тунă май, — тенĕ В. М. Молотов çак договор çине алă пуснă чухне,—эпĕ демократиллĕ çĕнĕ Болгари тăвас ĕçре хамăрпа тăван Болгари халăхне çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырă суннатăп. Хăйĕн политикин ленинла-сталинла принципĕсене яланах çирĕппĕн пурнăçласа пыракан Совет Союзĕ Болгари Халăх Республикине яланах пулăшса пычĕ тата малашне те ăна çавăн пекех пулăшса тăрĕ».

Совет Союзĕпе Болгари хушшинчи договора хак парса, Болгари халăхĕн çулпуçĕ Георгий Димитров çак договор Болгарири ĕçсыннисен социализм тăвас ĕçри хастарлăхне вăйлатать, тесе каланă.

Çак сăмахсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулни иртнĕ пилĕк çул хушшинче лайăх палăрчĕ. Совет Союзĕпе Болгари пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлесе пурăнчĕç, ССР Союзĕ Болгари халăхне ырă кăмăлпа тăванла пулăшса пычĕ. Çакна май Демократиллĕ Болгари Халăх Республики малалла чечекленсе пычĕ. Болгарири коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Болгари халăхĕ хавхаланса ĕçлесе çĕнĕ пурнăç тăвать.

Иртнĕ çулта Болгарири ĕçсыннисем пилĕк çуллăх плана палăртнă ĕçсене туса пĕтерчĕç, пилĕк çуллăх плана тăватă çул хушшинче пурнăçларĕç. Халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те пысăк çитĕнÿсем тунă. 1951 çултах промышленность вăрçăчченхинчен 4,6 хут ытла продукци туса кăларнă. 1952 çулта промышленность 1951 çулхинчен 18 процент ытларах продукци панă. Болгарири предприятисем пĕр çулталăк хушшинче 130 ытла çĕнĕ йышши машинăсемпе механизмсем тăвассине йĕркелесе янă. Промышленноçăн вуншар çĕнĕ предприятийĕсем ĕçлеме тытăннă. Балкан тăвĕсем хушшинчи чугун çула туса пĕтернĕ. Ку чугун çул çĕршывăн хĕвеланăçĕнчи районĕсене Хура тинĕс хĕрринчи Сталин хулипе тата Бургаспа—çав портлă хуласемпе çыхăнтарать.

Çĕршывра промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсене, вăл шутра машиностроени, электромашиностроени отраслĕсене тата хими промышленноçĕ тунă. Кăçал Болгарире малтанхи хут хурçă шăратма тытăнаççĕ. Болгарире халĕ В. И. Ленин ячĕпе тăракан металлурги заводĕ—çĕршыврi индустрин гигантне тăваççĕ, çав завод кăçал хурçă шăратса пама пуçлать. Кăçал Габрово тата Пловдив хулисенчи икĕ пысăк пир-авăр комбиначĕсене туса пĕтереççĕ. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле çĕршыври пенициллин тăвакан пĕрремĕш завод тата ытти предприятисем ĕçе кĕреççĕ.

Совет Союзĕ Болгарие оборудовани, машинăсем, промышленноçа кирлĕ чĕртавар парса тăрать, наукăпа техника енĕпе пулăшать. Болгари экономика енĕпе Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе тăракан çыхăнăва пур майсемпе те аталантарса пырать, тĕнчери демократиллĕ çĕнĕ рынока активлăн хутшăнать.

«Пĕр-пĕринпе çавăн пек килĕштерсе ĕçленин опычĕ,—тенĕ Сталин юлташ,—акă мĕн кăтартса парать: халăх демократи çĕршывĕсене Совет Союзĕ чăн-чăнах паха тата техника тĕлĕшпе квалификациллĕ пулăшу парса тăрать, ун пек пулăшăва вĕсене пĕр капитализмлă çĕршыв та парайман пулĕччĕ. Ĕç çав пулăшу нитех те йÿнĕ тата техника енĕпе чи паха пулнинче кăна мар. Ĕç чи малтан акă мĕнре: çавăн пек килĕштерсе ĕçленин никĕсĕ пĕр-пĕрне тÿрĕ кăмăлпа пулăшма тăрăшни тата экономикăра пĕтĕмĕшле ÿсĕм тума тăрăшни пулать. Çакна пула çав çĕршывсенчи промышленность пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса пынине эпир куратпăр». («ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем», 31 стр.).

Ĕлĕк Болгари урăх çĕршывсене сутнă таварсенчен 90 проценчĕ ытла чĕртаварпа апат-çимĕç продукчĕсем пулнă. Халĕ Болгари урăх çĕршывсене тимĕр тăпри, тĕслĕ металсем, электромоторсем, цемент, азотлă удобренисем, кÿкĕрт кислоти тата ытти таварсем ытларах сутать, çавăн пек таварсене нумай пулмасть Болгари хăй урăх çĕршывсенче туяннă пулнă. Индустри малалла аталанса пынă май Болгари хăй туса хатĕрленĕ таварсене урăх çĕршывсене ытларах та ытларах сутма тытăнать.

Çĕршыва хăвăрт индустриализацилесси ялхуçалăхне урăхлатса çĕнетме пулăшать. Ялхуçалăхĕнче çĕнĕ техникăпа усă курмалла тăваççĕ. Иртнĕ çулта республика уй-хирĕсенче 12 пин трактор, Совет Союзĕнче тунă 1.300 комбайн тата ытти машинăсем ĕçленĕ.

Болгарири ялсенче пĕрлĕ йĕркепе çĕрĕç кооперацин хуçалăхĕсем (ТКЗХ) тăвасси анлă саралнă. Пĕлтĕр çавăн пек хуçалăхсем мĕнпур хресчен хуçалăхĕсен 53 процентне пĕрлештерсе тăнă, акмалли пĕтĕм çĕрĕн 60 проценчĕ яхăн çав хуçалăхсен аллинче пулнă. Вĕсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетме халăх влаçĕ яланах хытă тăрăшать. Çĕрĕç кооперацин хуçалăхĕсене уй-хирти ĕçсене тума çĕршыври 140 машина-трактор станцийĕ пулăшать, çав хуçалăхсенче малта пыракан агротехникăна пурнăçласа пыраççĕ, совет ялхуçалăх наукин пуян опычĕпе усă курса ĕçлеççĕ.

Пĕрлешсе ĕçлени усăллăрах пулнине ĕçхресченĕсем практикăра курса пĕлеççĕ. Ялхуçалăхĕн чи çĕнĕ техникипе усă курса, агротехника вĕрентнине пурнăçласа пырса, çĕрĕç кооперацин членĕсем уйрăм хуçалăхлă хресченсенчен чылай пысăкрах тухăçлă тыррул туса илеççĕ. Болгарири ĕçченсем ялхуçалăхне социализмла урăхлатса çĕнетни пуян та культурăллă пурнăç тумалли пĕртен-пĕр шанчăклă çул пулса тăнине лайăх кураççĕ.

Болгарири ĕçсыннисем хăйсен çĕршывĕн чăн-чăн хуçисем пулса тăнăранпа ĕç çине мĕнле пăхасси тĕпренех улшăнчĕ. Болгарири предприятисенче, çĕнĕ стройкăсенче тата ялхуçалăхĕнче социализмла ăмăртса ĕçлесси анлă саралса пырать, халăх хуçалăх планĕсене хăвăртрах пурнăçлассишĕн кĕрешекен новаторсемпе рационализаторсен юхăмĕ вăйланать. Ĕçре малта пыракан пиншер çынсене орденсемпе медальсем парса наградăланă, нумайăшне Димитровла премин лауреачĕн тата Социализмла Ĕç Геройĕн хисеплĕ ячĕсене панă.

Болгарири коммунистсен партийĕпе халăх правительстви халăхăн пурнăçри ÿссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме, халăх пурнăçне лайăхлатма тата культурине ÿстерме яланах хытă тăрăшаççĕ. Пĕлтĕр çĕршывра укçа реформине ирттернĕ, государствăн апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем ваккăн сутмалли хакне икĕ хутчен йÿнетнĕ. Çавна май çĕршывра укçа хакĕ çирĕпленнĕ, ĕçсыннисен тупăшĕ ÿснĕ. Суту-илÿ магазинĕсен шучĕ çултан-çул нумайланса пырать, халăх çултан-çул ытларах та ытларах тавар туянать. Ĕçсыннисен социальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерме государство укçа нумай расходлать.

Республикăра культура строительстви анлă саралнă: çĕнĕ шкулсем, библиотекăсем, вулав çурчĕсем, клубсем, театрсем тăваççĕ. 1944 çулччен çĕршывра пилĕк аслă шкул пулнă пулсан, халĕ вара 13 аслă шкул ĕçлет, студентсен йышĕ виçĕ хут ытла ÿснĕ. Пысăк инкеке — хутпĕлменлĕхе пĕтерессии ăнăçлă пулса пырать. Халăх влаçĕ вăхăтĕнче пиншер ĕçсыннисем хутпĕлменлĕхе пĕтермелли курссенче вулама тата çырма вĕреннĕ. Республикăри культурăлла вăйсем умне Болгарие хăвăртрах пурте хутла пĕлекен çĕршыв туса хурас задача лартнă.

Болгари халăхĕ çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçри чаплă çитĕнÿсене çĕршыври реакцие—Америкăпа Англи империалисчĕсем активлăн пулăшса тăракан реакцие хирĕç çине тăрса, ним килĕшмесĕр, хытă кĕрешнипе тума пултарчĕ. Çĕнĕ Болгарин хаяр тăшманĕсем Болгари халăхне сиенлеме, Болгари халăхне мир лагерĕнчен, хăйне ирĕке кăларнă аслă та туслă çĕршывран—Совет Союзĕнчен уйăрма сахал мар тăрăшнă. Америкăпа Англи империалисчĕсен тарçи—Трайчо Костовăн бандине, Никола Петковăн бандине, евангелистла тата католикла тĕнсен священникĕсен шпионла организацийĕсене тата ыттисене айăпламалли ĕçсене судра пăхса тухнă чухне пĕтĕм тĕнчери реакци чăннипе мĕн тума шутланине пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларнă, тĕнчери реакци Болгари Халăх Республикин ирĕклĕхĕне никама пăхăнманлăхне хирĕç преступниллĕ ĕçсем тума шутлани пĕтĕмпех палăрнă.

Болгари халăхĕ хăй çĕнсе илнисене хытă сыхлать. Болгари халăхĕ малашне те империалистла реакцине унăн агентурин ирсĕр ĕçĕсене хирĕç вăйлăн отпор пама хатĕр.

Совет Союзĕпе Болгари договор тунăранпа пилĕк çул тултарнине палăртса, Болгарири ĕçсыннисем Совет Союзне чунчĕререн тав тăваççĕ, Совет Союзĕ ырă кăмăлпа пулăшни вĕсене социализм тăвас ĕçе ăнăçлă пурнăçласа пыма май парать. Ĕçсыннисем Болгари халăхĕн аслă тусне, ăна ирĕке кăларакана тата хÿтĕлекене Иосиф Виссарионович Сталина ĕмĕр-ĕмĕр асăнса, унăн ятне чĕрере тытса пурăнĕç. Çĕнĕ Болгарин мĕнпур çитĕнĕвĕсем Сталин ячĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Çулпуçăн таса та çутă ячĕ Болгари халăхне хăйĕн тăван çĕршывĕн мухтавĕпе чапĕшĕн çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантарать.

И. В. Сталин вилнĕ пирки пĕтĕм халăх хытă хурланнине палăртса, Болгарири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ хурланса пĕлтерекен телеграммăра çапла çырчĕ:

«Чĕре питĕ хытă ыратакан çак кунсенче эпир, Болгарири коммунистсем тата пирĕн пĕтĕм халăх, Сталин юлташа çав тери хисеплесе асăнса, Иосиф Виссарионович Сталинăн вилĕмсĕр ĕçне, Совет Союзĕнчи коммунистсен вăл вĕрентсе çирĕплетнĕ партине, Совет Союзĕпе тата совет халăхĕпе тытакан çирĕп туслăха яланах, юлашки сывлăш тухиччен, чун-чĕререн парăнса тăма тупа тăватпăр».

Д. БОЧАРОВ.

Тӑван ҫӗршыва йывӑҫ ытларах хатӗрлесе парар!

Плана кашни вӑрманпромхоз, кашни район тултартӑр

Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ вӑрман промышленноҫӗ халӑх хуҫалӑхӗн ӳссе пыракан ыйтӑвӗсенчен юлса пынине пӗтерме хушса хӑварчӗ. «Чӑвашвӑрман» трестӑн тата вӑрманпромхозсен руководителӗсем парти кӑтартӑвӗсенчен тивӗҫлӗ вывод тунаннине пула, республикӑри вӑрман промышленноҫӗ ҫав-ҫавах япӑх ӗҫлет-ха. 1952 ҫулхи IV-мӗш кварталта тата кӑҫалхи январьпе февраль уйӑхӗсенче республика ҫӗршыва ҫӗршер пин кубометр йывӑҫ парса ҫитерейменӗ.

Партипе правительство вӑрман промышленноҫне хӑватлӑ техникӑпа хӗҫпӑшалалантарчӗҫ. Кашни вӑрманпромхозра пуҫарулӑ, ӗҫе ӑста пӗлекен механизаторсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Малта пыракан вӑрман пункчӗсен, бригадӑсен опычӗ ҫакна уҫӑн кӑтартса парать: кашни вӑрманпромхозӑн плана тултарма ҫеҫ мар, ирттерсе тултарма та мӗн кирли пурте ҫителӗклӗ, хӑватлӑ техникӑпа туллин усӑ курни, кашни рабочи валли тухӑҫлӑ ӗҫлеме паха майсем туса пани ҫеҫ кирлӗ.

Ҫӗмӗрле вӑрманпромхозӗнчи Мисчӗ вӑрман пункчӗ кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра йывӑҫ турттарса кӑлармалли плана срокчен тултарнӑ. Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем хурлӑхлӑ митингра совет ҫыннисене чӗнсе калани ҫине ответлесе, вӑрман пункчӗн коллективӗ Тӑван ҫӗршыва планран ирттерсе пиншер кубометр йывӑҫ хатӗрлесе пама пулнӑ.

Алтышево вӑрманпромхозӗнчи механизаторсем паха тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ. Малта пыракан Орликово вӑрман пункчӗ кӗркуннепе хӗллехи сезон планне срокчен тултарнӑ. Ытти вӑрманпромхозсенче те малта пыракан участоксемпе бригадӑсем пур.

Кӗркуннепе хӗллехи вӑрман хатӗрлемелли сезон вӗҫлениччен икӗ эрнерен те сахалтарах юлчӗ. Вӑрманпромхозсен руководителӗсен кашни кунпа, кашни сехетпе лайӑхрах усӑ курма тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнас пулать. Ку кунсенче механизмсем кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлетчӗр, кашни рабочи ӗҫ нормине тӑтӑшах ирттерсе тултарма пултартӑр.

Кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра касса хатӗрленӗ ҫӗршер пин кубометр йывӑҫа юханшывсем тӑрӑх ӑсатмалла. Ҫурхи шыв-шур тапраниччен юханшыв хӗррине илсе тухмасан, пӗренесем тепӗр ҫуркуннеччен вӑрманта юлма пултараҫҫӗ. Вӑхӑтра турттарса кӑларман паха пӗренесем ҫуркаланса пӑсӑлаҫҫӗ, кӑвакараҫҫӗ, ӗҫе юрӑхсӑр пулаҫҫӗ. Касса хатӗрленӗ йывӑҫа пӗр пӗрене тараниччен ҫуна ҫулӗпе турттарса кӑларас пулать. Унсӑрӑн государство пысӑк сиен курма пултарать.

Пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, вӑрман хатӗрлекен рабочисем хамӑр ҫӗршыв экономикине малалла тӗреклетессишӗн, коммунизм обществине хӑвӑртрах туса ҫитерессишӗн хӑйсен вӑйне шеллемесӗр кӗрешеҫҫӗ. Вӗсем Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе Совет правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫме тупа турӗҫ, Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн тата тухӑҫлӑрах ӗҫлеме социализмла обязательствӑсем йышӑнчӗҫ. Вӑрманпромхозсенчи партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсем, хуҫалӑх руководителӗсем рабочисемпе служащисен политикӑллӑ активлӑхӗпе ӗҫри хастарлӑхне малалла вӑйлатса пыма, панӑ сӑмаха чыслӑн пурнӑҫласа пыма кашни рабочи валли паха майсем туса пама тивӗҫлӗ.

Республика государство заданине чыслӑн пурнӑҫласси колхозсенчен те сахал мар килет. Правительство йышӑннӑ тӑрӑх, кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра колхозсен государствӑна ҫӗршер пин кубометр йывӑҫ хатӗрлесе памалла. Шупашкар тата Куславкка районӗсенчи колхозсем хӑйсен Тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫларӗҫ. Кашни районтах малта пыракан колхозсем пур. Анчах нумай районсем вӑрман хатӗрлевӗ енӗпе хытӑ юлса пыраҫҫӗ. Сӑмахран, Ҫӗрпӳ, Елчӗк, Тӑвай, Красноармейски, Советски районӗсем йывӑҫ хатӗрлемелли сезон планне ҫуррине те тултарман. Тен, вӗсен плана тултарма ӗҫ вӑйӗпе туртӑм вӑйӗ ҫитмест? Апла калама нимӗнле сӑлтав та ҫук. Пӗр-ик тӗслӗх ҫеҫ илсе пӑхӑпӑр. Елчӗк районӗ Шӑмӑршӑ районӗнчен нумай пысӑккине пурте пӗлеҫҫӗ. Апла пулин те вӑл государство валли, Шӑмӑршӑ районӗпе танлаштарсан, икӗ хута ячӑн йывӑҫ сахалтарах касса хатӗрленӗ, 50 процент сахалтарах турттарса кӑларнӑ. Комсомольски районӗнчи колхозниксем вичӗ район чухлӗ — Ҫӗрпӳ, Красноармейски тата Советски районӗсем хатӗрленӗ чухлӗ йывӑҫ хатӗрленӗ.

Юлса пыракан районсем стахановла уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче те ӗҫре палла улшӑнусем тӑваймарӗҫ. Чылай районсем вӑрмана ӗҫ вӑйӗпе туртӑм вӑйӗ ҫителӗксӗр уйӑрса янӑ. Ҫак пысӑк ҫитменлӗхе халех пӗтермелле. Кашни район, колхоз государство заданине пурнӑҫлама пултарать, пурнӑҫламалла та.

Ҫӗршывра пилӗк ҫуллӑх плана срокчен тата ирттерсе тултарассишӗн социализмла ӑмӑрту сарӑлса кайрӗ. Халӗ пӗтӗм совет халӑхӗ стахановла вахтӑна тӑчӗ. Халӑх хуҫалӑх планӗсене ӑнӑҫлӑ тултарса пыма ҫӗршыва пӗрене, хӑма, шпал, вутӑ тата ытти йывӑҫ материалсем нумай кирлӗ. Пирӗн республикӑра вӑрман нумай. Эпир Тӑван ҫӗршыва йывӑҫ материалсем ытлӑн-ҫитлӗн парса тӑма пултаратпӑр, парса тӑмалла та. Районсенчи партипе совет организацийӗсем, агитаторсемпе пропагандистсем халӑх хуҫалӑхне йывӑҫ мӗн тери кирли ҫинчен колхозниксене тӗплӗн ӑнлантарса пама, колхозниксене государство заданине чыслӑн пурнӑҫламашкӑн мобилизацилеме тивӗҫлӗ.

КПСС Йӗпреҫ, Ҫӗмӗрле, Вӑрнар, Первомайски, Шӑмӑршӑ, Улатӑр, Пӑрачкав тата Канаш райкомӗсен вӑрманпромхозсенчи парторганизацисене рабочисемпе колхозниксем хушшинче партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе вӑйлатма, социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарма пулӑшмалла.

КЕРКУННЕПЕ ХЕЛЛЕХИ ВАХАТРА ВАРМАН ХАТЕРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧАВАШВАРМАН» ТРЕСЧӖ ЕНЕПЕ 1953 СУЛХИ МАРТАН 15-мӗшӗ ТЕЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

Районсем	Касса хатӗрленӗ	Ҫул хӗррине илсе тухнӑ	Турттарса кӑларнӑ
Улатӑр	57,4	64,3	67,0
Элӗк	51,8	58,9	33,9
Вӑрнар	56,6	46,8	60,6
Йӗпреҫ	53,4	23,0	46,2
Ишлей	—	—	83,0
Калинино	52,5	51,7	51,7
Канаш	64,9	39,0	54,4
Комсомольски	98,5	70,4	88,2
Куславкка	123,2	100,2	108,4
Красноармейски	41,6	15,9	36,4
Хӗрлӗ Чутай	62,6	22,2	—
Кувакино	53,1	30,0	63,4
Сӗнтӗрвӑрри	90,8	65,3	—
Муркаш	91,2	90,6	—
Октябрьски	88,8	78,1	60,6
Первомайски	82,0	60,8	61,6
Пӑрачкав	72,6	79,3	26,1
Советски	47,3	91,6	23,8
Сӗнтӗр	—	34,2	—
Вӑрмар	69,6	19,4	58,4
Ҫӗрпӳ	37,7	11,6	53,1
Шупашкар	136,6	123,8	122,6
Чкаловски	108,1	103,0	73,1
Чурачӑк	65,7	45,8	102,8
Шӑмӑршӑ	73,6	23,7	80,5
Шӑхасан	65,5	37,0	48,2
Ҫӗмӗрле	82,9	95,9	101,5
Етӗрне	—	25,5	46,4
Елчӗк	37,0	92,4	43,1
Тӑвай	49,8	17,4	45,5

Механизаторсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳсет

АЛТЫШЕВО, мартӑн 15-мӗшӗ. (Телефонпа). «Чӑвашвӑрман» треста пӑхӑнса тӑракан вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисем Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем Хӗрлӗ площадьри хурлӑхлӑ митингра тухса каланӑ сӑмахсене пысӑк тимлӗхпе вуласҫӗ. Агитаторсем цехсенче, хӗрлӗ кӗтессенче каласусем ирттереҫҫӗ. Хурлӑхлӑ митингсенче рабочисемпе служащисем И. В. Сталин хушса хӑварнисене пурнӑҫа кӗртессишӗн вӑя шеллемесӗр ӗҫлеме пулни ҫинчен Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе Совет Правительствине шантарса калаҫҫӗ.

Орликово вӑрман пунктӗнче ирттернӗ хурлӑхлӑ митингра паллӑ стахановецтракторист Н. Вельдяев юлташ Ленин—Сталин партине чунтан-чӗререн парӑнса тӑма тупа турӗ, пӗтӗм вӑй-хӑвата хамӑр ҫӗршывра коммунизм тӑвас ӗҫе пама пулчӗ, ҫӗнӗ социализмлӑ обязательство йышӑнчӗ. Вӑл тухса каланине унӑн ученикӗ пулнӑ ҫамрӑк тракторист М. Платонов юлташ ырларӗ, ӗҫ нормине куллен 150 процентран кая мар тултарса пыма сӑмах пачӗ.

Стахановецсем хӑйсен сӑмахне чыслӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Норма тӑрӑх сменӑра КТ-12 тракторпа 40 кубометр йывӑҫ ҫул хӗррине илсе тухмалла. М. Платонов юлташ 60—65 кубометр, Н. Вельдяев юлташ — куллен 60—80 кубометр илсе тухаҫҫӗ. С. Горятнев тракторист та ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартать.

Юлашки кунсенче шоферсен пуҫарулӑхӗпе пултарулӑхӗ чылай ӳсрӗ. Коммунист-шоферсем И. Козыревпа Д. Колобаев юлташсем, партире тӑман шофер А. Кожняков юлташ ӗҫ нормине куллен 150 процентран кая мар тултарса пыма пулчӗҫ. Ытти механизаторсем те социализмла обязательствӑсем йышӑнчӗҫ.

Вӑрманпромхоз коллективӗн политикӑллӑ активлӑхӗпе ӗҫри хастарлӑхӗ вӑйланса пынине ҫакӑнтан курма пулать: юлашки пилӗккунлӑхра вӑрманпромхоз, унчченхи пилӗккунлӑхрипе танлаштарсан, 20 процента яхӑн йывӑҫ ытларах касса хатӗрлерӗ, 30 процента яхӑн нумайрах турттарса кӑларчӗ.

Пирӗн вӑрманпромхозра Вӑрмар тата Кувакино районӗсенчи колхозниксем ӗҫлеҫҫӗ. Вӑрмар районӗнчи «Правда», «Красная Кубня» колхозсемпе Мичурин ячӗпе тӑракан колхоз государство заданине чыслӑн пурнӑҫларӗҫ. «Родина» колхоз плана ҫитес кунсенче тултарать. Кувакино районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхоз каснӑ йывӑҫа турттарса кӑлармалли плана тултарчӗ. Колхозниксем каснӑ йывӑҫа ҫул хӗррине илсе тухмалли плана тепӗр эрнерен тултарма сӑмах пачӗҫ. «8-е марта» колхоз членӗсем вӑрман хатӗрлемелли плана срокчен тултарчӗҫ.

В. ПАСЫНКОВ,
Алтышево вӑрманпромхоз директорӗ.

Ҫураки умӗн

Вӑраххӑн юсаҫҫӗ

ШӐХАСАН. Кӑҫалхи ҫуракинче МТС-ӑн пӗлтӗрхинчен чылай нумайрах ӗҫ тумалла пулать. Тракторсемпе тата ытти ялхуҫалӑх машинисемпе тухӑҫлӑ ӗҫлес тесен, вӗсене хӗллехи вӑхӑтра тӗплӗ юсамалла, уй-хирте ӗҫленӗ чухне лайӑх пӑхмалла. Иртнӗ ҫулта, начар юсанӑ пирки, тракторсем ӗҫлемесӗр тӑнӑ тӗслӗхсем пулчӗҫ.

Кӑҫал та МТС тракторсемпе ытти ялхуҫалӑх машинисене юсас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлет. Кунта малта пыракан опыта йышӑнма тӑрӑшмаҫҫӗ, мастерскойӗнче юсав ӗҫне тӗрӗс йӗркелемен.

МТС коллективӗ тракторсемпе ытти ялхуҫалӑх машинисене апрелӗн 1-мӗшӗ тӗлне юсаса пӗтерме обязательство илнӗ. Анчах МТС ҫав обязательствӑна кирлӗ пек пурнӑҫласа пыраймасть.

Малтанхи вӑхӑтра МТС директорӗ Н. Константинов юлташ та, механиксемпе бригадирсем те тракторсене узловой меслетпе юсани тата ӗҫ ӑнӑҫлӑ пыни ҫинчен мухтанма пикенчӗҫ. Халӗ вӗсем урӑхла юрӑ юрлама тытӑннӑ.

Тракторсене узловой меслетпе мар, бригадӑсем тӑрӑх юсаҫҫӗ. Кунта моторсене ӗҫлеттерсе пӑхмасӑр, горючи мӗн чухлӗ расходланине тӗрӗслемесӗр тракторсене мастерскойран кӑларнӑ тӗслӗхсем те пулнӑ. Мастерскойра сивӗ, тасалӑх ҫук, ӗҫ нормисене йӗркелесе ҫитермен.

МТС руководителӗсем юсав ӗҫне хӑвӑртлатма запаслӑ пайсем ҫукки чӑрмантарать, тесе калама пӑхаҫҫӗ. Тӗрӗссипе вара кая юлнин сӑлтавӗ юсав ӗҫне ярӑх организациленинче тата ҫак ӗҫе кирлӗ пек ертсе пыманнинче пулать. Мастерскойра куллен 35—40 ҫын ӗҫлес вырӑнне 20—25 ҫын ҫеҫ ӗҫлет. 3-мӗш трактор бригадин бригадирӗ Я. Сергеев юлташ юсав ӗҫне хӑй те тивӗҫлипе хутшӑнман. Ҫавна кура бригадӑри ытти механизаторсем те активлӑх кӑтартмаҫҫӗ. Ҫак бригада 5 трактортан виҫҫӗшне ҫеҫ юсаса пӗтернӗ.

МТС-ра политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе ҫителӗксӗр туса пыраҫҫӗ. Мастерскойра ӗҫлекенсем хушшинче парти решенийӗсем, умра тӑракан задачӑсем ҫинчен ӑнлантарса памаҫҫӗ. Рабочисем валли уйӑрнӑ общежитире хаҫат-журналсем, шашка, домино ҫук. Ҫакӑ вӑл МТС директорӗпе унӑн политика енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Ефремов юлташ рабочисен ыйтӑвӗсем ҫине кирлӗ пек пӑхманни ҫинчен калать.

МТС-ра трактористсен курсӗ ӗҫлет. Унта 20 ҫын вӗренет. Вӗсем хушшинче те нимӗнле массӑллӑ-ӑнлантарулӑ ӗҫ те тумаҫҫӗ.

«Коммунизм ялавӗ» хаҫат ялкорӗсен бригади: **В. ИВАНОВ, В. ВЕСЕЛОВ, В. КУРОПАТКИН.**

Вӑйлӑ тырпулшӑн тимлӗрех кӗрешмелле

ЙӖПРЕҪ. Кӑҫал вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн Чкаловски районӗнчи колхозниксем республикӑри мӗнпур колхозниксемпе ялхуҫалӑх специалисчӗсене тата МТС-сен механизаторӗсене социализмла ӑмӑртӑва анлӑн хутшӑнма чӗнсе каларӗҫ. Чкаловецсен чӗнӗвне кашни колхоз йышӑнса илме тивӗҫ, колхозниксене пурне те социализмла ӑмӑртӑва хутшӑнтармалла.

Йӗпреҫ районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан тата «Путиловка» колхоз членӗсем, Чкаловски районӗнчи колхозниксен чӗнӗвне сӳтсе явса, кӑҫал кашни гектартан 16 центнертан кая мар тӗштырӑ туса илме сӑмах пачӗҫ. Ку колхозсем ҫураки ирттерме хатӗрленсе ҫитнӗ.

Анчах та районти нумай колхозсем Чкаловски районӗнчи колхозниксен чӗнӗвне халӗ те сӳтсе явман-ха, ҫуракине хатӗрленес ӗҫсене кая хӑварса пыраҫҫӗ. Сӑмахран, «Правда» колхозах илер. Кунта вӑрлӑхсене тасатса пӗтермен, чылай вӑрлӑхсем акма юрӑхсӑр. Хӗллехи вӑхӑтра хире 10 пин лав ытла тислӗк кӑларса хатӗрлемелле, халӗ пурӗ те 180 лав кӑна кӑларнӑ. Колхозра Госсортоучасток ӗҫлет. Унӑн агрономӗсем колхозра пурӑнаҫҫӗ. Анчах Михайловпа Никитин агрономсем колхоза ҫуракине хатӗрлеме пулӑшмаҫҫӗ.

«Заря» тата «X лет Октября» колхозсенче ялхуҫалӑх машинисене юсас тата акма вӑрлӑх хатӗрлес ӗҫсем ҫине тивӗҫлипе пӑхмаҫҫӗ. «Заря» колхоз председателӗ Ф. Асанов юлташ мисе плуг, мисе сӳре юсанине тата мӗн чухлӗ юсамаллине пӗлмест. Колхозӑн 30 центнер вика вӑрри, 5 центнер кантӑр вӑрри тата 25 центнер йӗтӗн вӑрри ҫитмест. Анчах та ҫакӑ никама та пӑшӑрхантармасть, вӑрлӑх илсе хатӗрлеме тӑрӑшмаҫҫӗ. «X лет Октября» колхоз пирки те ҫакнах калас пулать. Крупская ячӗпе, Молотов ячӗпе тӑракан тата ытти хӑшпӗр колхозсенче уя юр тытса хӑвармалли плана ҫуррине те тултарман.

Районти колхозсенче торф кӑларас ӗҫе пӗрре те хакламаҫҫӗ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсӑр пуҫне пӗр колхоз та торф кӑлармасть.

Март уйӑхӗ—ҫуракине хатӗрленсе ҫитмелли юлашки уйӑх. Кашни колхоз ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе туса пӗтермен ӗҫсене хӑвӑртрах вӗҫлемелле, колхозниксене пурне те ҫуракине хатӗрленме ҫӗклемелле.

Н. ПАВЛОВ.

Ҫулсерен тӗрекленет

ЧУРАЧӐК. «За коммунизм» колхоз ҫулсеренех вӑйлӑ тырпул ӳстерет.

Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илесси тӑпра пахалӑхӗнчен килет. Колхоз тӑпра пахалӑхне ӳстерме вырӑнти тата минераллӑ удобренисемпе анлӑн усӑ курать. Суха кассине ҫултан-ҫул тарӑнлатса пырса 24 сантиметра ҫитернӗ. 1950 ҫулта уй-хире 920 тонна тислӗк, 300 центнер суперфосфат кӑларнӑ пулсан, 1952 ҫулта 2.000 тонна тислӗк, 423 центнер суперфосфат, 240 центнер кали тӑварӗ кӑларнӑ. Кунсӑр пуҫне вырӑнти удобренисемпе усӑ курнӑ. Колхоз уй-хир ӗҫӗсене вӑхӑтра туса пыма, тырпула лайӑх сортлӑ вӑрлӑхсемпе акма тытӑнчӗ. Ҫаксене пула ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхӗ те ӳсрӗ.

1949 ҫулхипе танлаштарсан, 1952 ҫулта ҫурхи тулӑ гектартан 2,8 хута яхӑн, урпа 4 хут ытла пухса кӗртнӗ. Ҫавӑн пекех ытти тӗштырӑсен тухӑҫлӑхӗ те ӳсрӗ.

Колхоз ҫуртрисем акмалли вырӑна кӗркуннех ҫӗртме туса хӑварать. Ҫапла туни тӑпрара нӳрӗк ытларах сыхласа хӑварма, ҫуракине хӑвӑрт ирттерме пулӑшать.

Фермӑсем те тӗрекленсе пыраҫҫӗ. 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 1952 ҫулта кашни ӗнерен 245 литр сӗт, кашни сурӑхран 0,7 килограмм ҫӑм, кашни чӑх пуҫне 38 ҫӑмарта ытларах илнӗ.

Юлашки виҫӗ ҫул хушшинче ӗне, пӑру, чӑх-чӗп витисем, зерносушилка, витнӗ итемсем туса лартнӑ.

Колхозӑн сепаратор, двигательпе ӗҫлекен арман, икӗ тимӗрҫӗ лаҫҫи, автомашина пур. Обществӑллӑ хуҫалӑх ӳссе вӑйланнипе пӗрле колхозниксен пурнӑҫӗ те тӑтӑшах лайӑхланса пырать.

В. ПРОКОПЬЕВ.

Клуб уҫӑнранпа 35 ҫул

Улатӑрти чугун ҫул ҫинче ӗҫлекенсен В. И. Ленин ячӗпе тӑракан клубне уҫӑнранпа кӑҫал 35 ҫул тултарать. Халӗ железнодорожниксем ҫак куна кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ.

Клуба 1918 ҫул пуҫламӑшӗнче, ҫамрӑк Совет государстви пулӑшнипе уҫнӑ. Малтанлӑха вӑл пысӑках пулман, унта пӗтӗмпе те ҫӗр ҫын анчах вырнаҫнӑ. Часах клубра культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫ вӑйланса каять. Железнодорожниксем, хӑйсен килӗсенчи кӗнекисене пухса, 500 кӗнекеллӗ библиотека тӑваҫҫӗ, халӑх пултарулӑхӗн кружокӗсене хутшӑнса спектакльсем лартма, концертсем ирттерме тытӑнаҫҫӗ.

Халӑхӑн политикӑллӑ, культурӑллӑ шайӗ ӳссе пынӑ май, 1925 ҫулта Улатӑрти железнодорожниксем валли 600 ҫын вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ клуб уҫаҫҫӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн клуб хӑйӗн массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫне тата анлӑрах сарса ярать.

1930 ҫул тӗлнелле библиотека фончӗ 20 пин кӗнекене ҫитет, вулакансен шучӗ пин ҫынтан иртет. халӑх пултарулӑхӗн кружокӗсенче 200 ҫын ытла ӗҫлеме тытӑнать. Кружок членӗсем хӑйсен концерчӗсене клубра ҫеҫ мар, производствӑри хӗрлӗ кӗтессенче те ирттерме тытӑнаҫҫӗ.

Клуб Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пысӑк ӗҫсем туса ирттерет, тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗнтерме ӗҫҫыннисен массине хавхалантарать, госпитальсенче концертсем парать, тӑшманран хӑтарнӑ хуласенче библиотекӑсем йӗркелеме кӗнекесем ӑсатать. Ҫак ӗҫсемшӗн клуба Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине, Хусан чугун ҫул Управленийӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне панӑ.

Халӑх пултарулӑхӗн кружокӗсенче ӗҫленӗ юлташсенчен нумайӑшӗсем хӑйсен пысӑк ӑсталӑхӗпе таланчӗсене палӑртрӗҫ, вӑтам шкулсемпе аслӑ шкулсенчен вӗренсе тухрӗҫ. Сӑмахран, А. Яшниковпа В. Сафанеев юлташсем Шупашкарти ҫамрӑксен театрӗнче артистсем пулса ӗҫлеҫҫӗ, Г. Чижова музыка шкулӗнче вӗренет. Быстрякова юлташ клубра библиотекӑра ӗҫлетчӗ, халӗ вӑл, аслӑ шкултан вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, Ленинградра Ленин музейӗнче экскурсовод пулса ӗҫлет. Пултарулӑх кружокӗсенче ӳссе ҫитӗннӗ ытти нумай юлташсем те культурӑпа идеологи фрончӗсенче ӗҫлеҫҫӗ.

Клубӑн кулленхи ӗҫӗсем ҫирӗп план тӑрӑх пулса пыраҫҫӗ. Партин XIX-мӗш съезчӗн материалӗсемпе сталинла ҫӗнӗ пилӗк ҫуллӑх план ҫинчен, коммунизмӑн аслӑ стройкисемпе тӗнчери лару-тӑру ҫинчен ирттерекен лекцисемпе докладсене итлеме железнодорожниксем кирек хӑҫан та йышлӑн пухӑнаҫҫӗ.

Юлашки ҫулсенче клуб куллен кирлӗ оборудованипе пуянланчӗ. 1952 ҫулта клуб валли кирлӗ япаласем туянма 300 пине яхӑн укҫа-тенкӗ расходланӑ. Клубӑн техникӑллӑ библиотеки пысӑк, унта 40 пин кӗнеке. Библиотекӑна ҫӳрекенсен йышӗ те кулленех ӳссе пырать. Халӗ вулакансен йышӗ 3.000 ҫын ытла.

Ҫапла, 35 ҫул хушшинче Улатӑрти чугун ҫул ҫинче ӗҫлекенсен В. И. Ленин ячӗпе тӑракан клубӗ чӑннипех культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫӗн пысӑк вучахӗ пулса тӑчӗ. Железнодорожниксем пуян та культурӑллӑ пурнӑҫ туса панӑшӑн Ленинпа Сталин партине, тӑван правительствӑна тав тӑваҫҫӗ.

З. ШАЛАЕВА.

Плана тултарнӑ

Госстрахӑн Ҫӗрпӳ районӗнчи инспекцийӗ кӑҫалхи пӗррремӗш кварталта страховка укҫи пухмалли плана мартӑн 14-мӗшӗ тӗлне 100,2 процент тултарчӗ.

Страховой инспектор С. Чернов хӑйӗн участокӗнче обязательнӑй страховани тата ирӗклӗ страховани укҫи пухмалли плана 139 процент, страховой инспектор Т. Панин—135 процент пурнӑҫларӗҫ.

А. ИСАЕВ.

Колхозсен укҫа-тенкӗ тупӑшне ӳстерессишӗн

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ ялхуҫалӑхӗ умне лартнӑ тӗп задачӑна ӑнӑҫлӑ татса пама ҫӗрӗҫӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫӗн культурине пур майсемпе те лайӑхлатса, колхозсен обществӑллӑ хуҫалӑхне нумай енлӗ аталантарса пымалла.

Ҫӗрӗҫне пӗрмаях механизацилесе пынипе колхозсенчи ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ҫултан-ҫул ӳссе пырать, ӗҫ вӑйӗпе туртӑм вӑйӗ те нумай пушанать. Ҫав вӑйсемпе колхоз производствин ытти отраслӗсенче усӑ курмалла.

Нумай енлӗ аталанса пыракан колхозсенче обществӑллӑ хуҫалӑх хӑвӑрт ӳссе пырать. Ун пек колхозсем ялхуҫалӑх ӗҫӗсене пурне те агротехника тӗлӗшӗнчен чи лайӑх срокесенче, пысӑк пахалӑхпа туса ирттереҫҫӗ, уйсене вырӑнти тата минераллӑ удобренисем нумай кӑлараҫҫӗ, хура ҫӗртме тӑвакан лаптӑка ҫултан-ҫул ӳстерсе пыраҫҫӗ, хӑмӑл сухи тӑваҫҫӗ. Кӗскен каласан, ҫӗре сухаласа ҫемҫетес ӗҫе агрономи науки вӗрентнӗ пек пурнӑҫлама тӑрӑшаҫҫӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех ун пек колхозсенче обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх пӑхса усрас ӗҫре те малта тӑракан меслетсемпе усӑ кураҫҫӗ, мичуринла агробиологин ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсене пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ.

Обществӑллӑ хуҫалӑхӑн таварлӑх продукцийӗ вӗҫӗмрен ӳссе пыни нумай енлӗ аталанакан колхозсене пысӑк тупӑш илме май парать. Тӗрлӗ отраслӗсене вӑйлатса пыма тӑрӑшман колхозсенче таварлӑ продукци ҫулталӑкӑн иккӗмӗш ҫур ҫулӗнче тин сутӑнма пуҫлать, ҫавна пула укҫан пухӑнакан тупӑшӑн пысӑк пайӗ колхоз кассине тӑваттӑмӗш кварталта кӑна кӗрет. Ҫапла вара ҫулталӑкӑн пӗррремӗш ҫур ҫулӗнче пӗр енлӗ хуҫалӑхлӑ колхозсен хӑйсен чи кирлӗ нушисене саплама та укҫа сахал пулать, вак инвентарь, удобренисем илме те укҫа ҫитмест, капиталовложени шучӗпе тумалли расходсем валли вӗсен ҫав хушӑра укҫа пачах пулмасть.

Нумай енлӗ аталанакан колхозсем тухӑҫлӑ тырпул туса илнисӗр, йышлӑ та тухӑҫлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетнисӗр пуҫне пахча ҫимӗҫ, улма-ҫырла, пыл туса илес тӗлӗшпе те тӗреклӗ, унсӑр пуҫне тата вӗсен тӗрлӗрен хушма хуҫалӑхсем те чылай. Ҫавна пула вӗсем экономика тӗлӗшӗнчен вӑйлӑ. Вӗсен кассине укҫан пухӑнакан тупӑш пӗр тапхӑр мар, ҫулталӑк тӑршшӗпех пӗр пекрех кӗрсе тӑрать. Ҫавӑнпа та производствӑра кирлӗ пулакан вак тӑкаксене те, капиталовложени тӑрӑх тумалли расходсене те пӗтӗм ҫулталӑк тӑршшӗпех, кирек хӑҫан та тума пултараҫҫӗ, унсӑр пуҫне тата ун пек колхозсем хӑйсен членӗсене ӗҫкунӗсем тӑрӑх аванс шучӗпе ҫулталӑк тӑршшӗпех укҫа пама пултараҫҫӗ. Ҫавна кура колхозниксем артелӗн хуҫалӑхӗн пур отраслӗсене те тӗреклетме тӑрӑшаҫҫӗ, хуҫалӑха пур енчен те вӑйлатассишӗн ҫине тӑрса кӗрешеҫҫӗ.

Укҫан пухӑнакан тупӑш ҫулталӑк тӑршшӗпех пӗр пек кӗрсе пынине пула, хуҫалӑха тӗрӗс тытса пыракан колхозсем государствӑна укҫан тӳлемелли обязательствӑсен пысӑк пайне налогсем тӗлӗшпе те, вӑхӑтлӑха е нумайлӑха илнӗ ссудӑсене те ҫулталӑкӑн пӗррремӗш ҫур ҫулӗнчех парса татма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех вӗсем машинӑсем, оборудовани, строительство материалӗсем т. ыт. те ҫулталӑк пуҫламӑшӗнчех е каярахпа та илеҫҫӗ. Паллах, ҫакӑ вӑл хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн финанс системипе тавар ҫаврӑнӑшне ҫирӗплетес ӗҫре чылай пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Нумай енлӗ аталанакан колхозсен опычӗ ҫакна кӑтартса пачӗ: вӗсен укҫан пухӑнакан тупӑшӗ, чи малтан, колхоз производствин ертсе пыракан отраслӗсен—тырпул туса илессипе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫсен—таварлӑх продукцийӗ ӳссе пынинчен килет.

Малта пыракан колхозсенче ҫӗрӗҫӗ лайӑхланса пынине ҫакӑнтан та куратпӑр: вӗсем пысӑк тупӑш паракан, техникӑллӑ культурӑсем нумай акаҫҫӗ, ҫав культурӑсен тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырассишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе чи малтан кантӑрпа йӗтӗн ҫинчен каламалла. Ку культурӑсене государство пысӑк хакпа илет, унсӑр пуҫне тата планран ирттерсе парсан премин хушса тӳлеҫҫӗ. Ҫакӑн пек йӗрке йӗтӗнпе кантӑр акакан ҫӗр лаптӑкне ӳстерме, ӗҫ вӑйӗсемпе лайӑхрах усӑ курма май парать, колхозсен укҫан пухӑнакан тупӑшӗсене самаях пысӑклатма пулӑшать.

Кантӑр акса колхозсем чӑннипех пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз 1951 ҫулта кантӑр акнӑ кашни гектар пуҫне 18 пин тенкӗ ытла, пӗтӗмпе ҫур миллион тенкӗ ытла тупӑш илнӗ. Республикӑри ытти колхозсем те кантӑртан пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Сӑмахран, Ҫӗрпӳ районӗнчи «Новая жизнь» артель 78.724 тенкӗ илнӗ, Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхоз — 20.279 тенкӗ.

Малта пыракан колхозсем нумай ҫул ӳсекен курӑк вӑррисем хатӗрлесе пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Ун пек колхозсем курӑк вӑррисене хӑйсен уйӗсене акмалӑх кӑна мар, государствӑна сутмалӑх та ҫитӗнтереҫҫӗ. Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз 1951 ҫулта нумай ҫул ӳсекен курӑк вӑррисем государствӑна 270 пин тенкӗлӗх панӑ, Комсомольски районӗнчи Ульянов ячӗпе тӑракан колхоз клевер вӑрри сутса 96 пин тенкӗ укҫа тата 2.700 пӑт тырӑ илнӗ.

Курӑксем акакан ҫӗр лаптӑкӗ ӳссе пыни обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатса пыма май парать. Малта пыракан колхозсем выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсенчен пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗх паракан тупӑш ҫулсерен тенӗ пекех пӗр тикӗсрех пухӑнать. Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхоз 1951 ҫулта пӗтӗмпе 431.302 тенкӗ тупӑш илнӗ, ку шутран выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ 314.091 тенкӗ панӑ. 1952 ҫулта фермӑсенчен илнӗ тупӑш 351 пин тенке ҫитнӗ. Колхоз 1952 ҫулта кашни ӗнерен вӑтам шутпа 2.233 литр сӗт суса илнӗ, кашни сурӑхран 4 килограмм та 650 грамм ҫӑм каснӑ.

Ытти колхозсенче те выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхӗ ӳссе пырать. Чкаловски районӗнчи «Гвардеец» колхозра кашни сӑвакан ӗне пуҫне 1.871 литр, Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра 1.641 литр сӗт суса илнӗ. Ҫӗмӗрле районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхозра кашни сысна аминчен вӑтам шутпа 20-шер ҫура илсе ӳстернӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе ҫапла вӑйлатса пыни колхозсен финанс хуҫалӑхне ҫирӗплетсе вӗсен экономикине ҫӗклесӗр пуҫне пӗтӗм халӑх хуҫалӑхӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫакӑ вӑл халӑх валли ялхуҫалӑх продукчӗсем, промышленность валли чӗртавар ытлӑн-ҫитлӗн парса тӑрас задачӑна татса пама кирлӗ.

Малта пыракан ялхуҫалӑх артелӗсен опычӗ тата ҫакна кӑтартса парать: пур колхозсенче те халӗ усӑ курмасӑр тӑракан резервсем нумай, ҫав резервсене ӗҫе ярсӑ колхозсем хӑйсен укҫан пухӑнакан тупӑшӗсене темиҫе хут ӳстерме, обществӑллӑ пурлӑха хӑвӑрт тӗреклетсе пыма пултараҫҫӗ. Кунта колхоз производствинче ҫак ӗҫсене тума кирли ҫинчен каламалла: пахча ҫимӗҫ лартса тӑвасси, сад, хурт-хӑмӑр ӗрчетесси, пӗвесемпе кӳлӗсем туса пулӑ ӗрчетесси.

Кувакино районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхозра сад 46,5 гектар йышӑнса тӑрать, унӑн пӗр пайӗнче тӗрлӗрен ҫырла йӑранӗсем. Колхоз улма-ҫырла сутса тӑвакан тупӑш хуҫалӑхра виҫӗ пайран пӗр пайне йышӑнать. Ун пек колхозсем пирӗн республикӑра тата пур. Сӑмахран, Ишлей районӗнчи «Мичуринец», Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Коммунизм», Шӑхасан районӗнчи Ленин ячӗпе, Киров ячӗпе тӑракан колхозсем иртнӗ ҫулта хӑйсен сачӗсенчен пысӑк тупӑш илме пултарнӑ.

Колхоз производствинче пахча ҫимӗҫ лартса тӑвас ӗҫ те пысӑк вырӑн йышӑнмалла. Пахча ҫимӗҫсем, чи малтан, колхозсене государство умӗнчи обязательствӑсене тултарма, унтан — колхозниксене ӗҫкунӗсем тӑрӑх валеҫсе пама кирлӗ.

Хуласемпе рабочи поселокӗсенчен аякри колхозсенче пахча ҫимӗҫе сутлӑх тӑвас ӗҫе вӑйлатмалла, пахча ҫимӗҫе типӗтме, тӑварлама, йӳҫӗтме вӗренмелле. Ҫавӑн пек хатӗрленӗ кыҫҫӑн вӗсене хуласене тӑратма ҫӑмӑлтарах.

Пахча ҫимӗҫ вӑррисене хатӗрлев организацисене сутса та колхозсем самаях пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Коммунизм» колхоз 1950 ҫулта пахча ҫимӗҫ вӑррисем сутса 100 пин тенкӗ, Киров ячӗпе тӑракан колхоз 60 пин тенкӗ илнӗ.

Хуҫалӑха нумай енлӗ аталантаракан колхозсенче хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗҫ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Пурте пӗлеҫҫӗ, пыл хурчӗсем ялхуҫалӑх культурисене шӑркаланма пулӑшаҫҫӗ, вӗсен тухӑҫлӑхне хӑпартаҫҫӗ. Ним иккӗленмесӗр ҫапла калама пулать: ӳсентӑрансен тухӑҫлӑхӗ, хурт-хӑмӑр ҫителӗклӗ ӗрчетмен пирки самаях чакать. Ялхуҫалӑх культурисемпе улма-ҫырла тухӑҫлӑхне ытларах ӳстерме кашни колхозрах хурт-хӑмӑр ытларах ӗрчетни кирлӗ.

Хурт-хӑмӑр ӗрчетни колхоза пысӑк тупӑш парать. Ҫӗмӗрле районӗнчи «Комбинат» колхоз 1951 ҫулта хӑйӗн утарӗнчен 26 тонна пыл пухса илнӗ, пыл сутса 250 пин тенкӗ тупӑш тунӑ. Первомайски районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз, 330 вӗлле пыл хурчӗ тытса, 150 пин тенкӗ тупӑш илнӗ.

Тырпул туса илес тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗп отраслӗсене вӑйлӑн аталантарса пынӑ никӗс ҫинче колхозсем тӗрлӗрен хушма хуҫалӑхсем тума пултараҫҫӗ. Сӑмахран, тырӑ, кӗрпе, ҫу, ҫӑм арманӗсем, тимӗрҫӗ лаҫҫисем лартмалла, платникпе столяр, слесарь ӗҫӗсене колхозрах тума мастерскойсем уҫмалла, ут таврашне, урапа-ҫуна юсас е ҫӗнӗрен тӑвас ӗҫе колхозрах организацилемелле. Хушма хуҫалӑхсем колхозсене хӑйсен ӗҫ вӑйӗпе ҫулталӑк тӑршшӗпех тухӑҫлӑн усӑ курма май параҫҫӗ. Колхозниксем ҫулла та, хӗлле те пӗр пек пикенсе ӗҫлеме пултараҫҫӗ.

Колхоз производствинчи нумай отраслӗсене пӗр-пӗринпе тӗрӗс ҫыхӑнтарнипе ӑнӑҫлӑ аталантарса, нумай енлӗ производство паракан пысӑк меслетсемпе пӗлсе усӑ курса, пирӗн республикӑри ялхуҫалӑх ӗҫченӗсем Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX-мӗш съезчӗ кӑтартса панӑ программӑна пурнӑҫа чыслӑн кӗртсе пырӗҫ.

Ф. АБАКУМОВ.

Америка империалисчĕсем Корейăри вăрçа мĕншĕн тăсса пыраççĕ

Вăрçă хыççăнхи çулсем Европăпа Азири демократиллĕ çĕршывсем, социализмла пĕр лагере пĕрлешсе, çултан-çул хăватлăланса пынипе тата капитализм тĕнчин хирĕçĕвĕсем ытларах та ытларах çивĕчленнипе палăрса тăраççĕ. Инçет Хĕвелтухăçĕнче тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăн пулнă питех те пысăк улшăну вăл—Китайра халăх революцийĕ çĕнтерни пулать. Совет Çарĕ империалистла Японие аркатса тăкни Китай халăхне ĕмĕрхи чуралăхран ирĕке тухма, Китай Халăх Республикине туса хума май пачĕ. Çавна пула Америка империалисчĕсем, Китайăн 80 миллион сынлă çарĕпе усă курса, Азири çĕршывсене чуралантарма, унтан Совет Союзне тытса илме, пĕтĕм тĕнчере хăйсем пуç пулса тăма ĕмĕтленни арканса кайрĕ.

Анчах та Уолл-стрит хуçисем хăйсен киревсĕр ĕмĕтне çаплах пăрахмаççĕ. Америка агрессорĕсем 1950 çулта мире юратакан Корея халăхне хирĕç вăрă-хурахла вăрçă пуçласа ячĕç, Китай Халăх Республикин Тайвань утравне оккупацилерĕç. Халĕ вĕсем Хĕвеланăç Германипе Японие çĕнĕрен хĕçпăшаллантараççĕ.

«Ку чухнехи капитализмăн экономикăлла тĕп законĕ,—тесе вĕрентет Сталин юлташ,—çĕршыври халăхăн пысăкрах пайне эксплуатацилесе, юхăнтарса тата чухăнлатса, ытти çĕршывсенчи, уйрăмах кая юлнă çĕршывсенчи, халăхсене пусмăрласа тата пĕрмаях çаратса, юлашкинчен, вăрçăсем каларса тата халăх хуçалăхне милитаризацилесе, капиталистсем валли чи пысăк услам илмелле тăвасси пулать».

Тĕнчери пĕрремĕш вăрçа та, иккĕмĕш вăрçа та империалистсем пысăк услам илес тĕллевпе пуçласа янине истори лайăх кăтартрĕ. Америка миллиардерĕсемпе миллионерĕсем тĕнчери пĕрремĕш вăрçăра вилнĕ кашни çын пуçне 3.800 доллар услам илнĕ. (Вăл вăрçăра пурĕ 10 миллион çын вилнĕ, 20 миллион çын чăлахланса юлнă). Тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра вилнĕ кашни çын пуçне Америка монополисчĕсем 5.200 доллар услам илнĕ. (Иртнĕ вăрçăра пурĕ 55 миллион çын вилнĕ). Тĕнчери виççĕмĕш вăрçа пуçласа яма хатĕрленекен США империалисчĕсем пулас вăрçăра вилнĕ кашни çын пуçне 10—15 пин доллар услам илме ĕмĕтленеççĕ. Корейăпа Китай халăхне хирĕç пуçласа янă вăрçăра вара Америка миллиардерĕсемпе миллионерĕсем хăйсем ĕмĕтленнинчен те ытларах услам илеççĕ. Вăрçăн малтанхи 18 уйăхĕ хушшинче США монополийĕсем вăрçăра вилнĕ кашни кореец, китаец, американец, акăлчан, француз пуçне 40-шер пин доллар услам илнĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Америка генералĕсем—миллиардерсемпе миллионерсен приказчикĕсем—Корейăра мир тăвасси çинчен пыракан калаçусене вĕçлеме пур майсемпе те чăрмантарса тăраççĕ. 1952 çулхи октябрьте вĕсем çав калаçусене юриех чарса лартрĕç.

* * *

Америка империалисчĕсем Корея халăхне хирĕç агрессиллĕ вăрçă пуçласа ярсанах, Сталин юлташ Корея ыйтăвне Хăрушсăрлăх Совечĕ урлă мирлĕн татса пама кирли çинчен каларĕ. Çапла ĕнтĕ, Корея ыйтăвне татса парас ĕçре Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ пысăк вырăн йышăнма тивĕçлĕ пулнă. Анчах та ООН-ри агрессорла ушкăн, Вашингтонран хушнă тăрăх, Корея халăхĕ тĕлĕшпе тăшманла политика тытса пырать. 1947 çултанпа Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин кашни сессийĕнчех Корея ыйтăвне сÿтсе яваççĕ. Америка ертсе пыракан агрессорла ушкăн, ООН Уставне киревсĕррĕн пăсса, кашнинчех Корея халăхне США империалисчĕсен интересĕсене пăхăнтармалли решени йышăнтарма тăрăшать.

Америкăн юнлă империализмĕ халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне пĕтерсе тăкма тата пĕтĕм тĕнчипе пуç пулса тăма ĕмĕтленет. США правительстви вăрçă хыççăнхи вăхăтра тухса тăнă ыйтусене, çав шутрах Корея ыйтăвне те, мирлĕн татса парассине хирĕç пыни шăпах çакăнтан килет. Корейăри вăрçа чарас тĕлĕшпе Кэсонра тата Паньмыньчжонра пынă калаçусене ăнăçлă вĕçлеме Америка агрессорĕсем пĕрмаях чăрмантарса тăчĕç. ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕнче Корея ыйтăвне сÿтсе явас умĕн вĕсем Паньмыньчжонри калаçусене киревсĕррĕн чарса лартрĕç. Çак вăхăт тĕлне каласса килĕшменни пурĕ те пĕр ыйту—тыткăна лекнĕ çынсене каялла тавăрса парас ыйту çеç юлнă. Китайпа Демократиллĕ Корея Халăх Республикин представителĕсем тыткăна лекнĕ çынсене мĕнле майпа пĕрпĕрне каялла тавăрса парасси çинчен тăратнă çĕнĕ сĕнĕве Америка агрессорĕсем сÿтсе явма килĕшмен.

Ишлей районĕнчи «Восток» колхоз членĕ В. Николаев юлташ панă ыйту çине ответлетпĕр.

Çапла ĕнтĕ, Америкăн Корейăри военщини тата унăн ООН-ри делегацийĕ пĕр пек çул тытса пыни уççăнах курăнать. Вĕсем иккĕшĕ те США монополийĕсен тарçисем пулса тăраççĕ. Америка монополийĕсем вара Корейăри вăрçа чарасшăн мар, ăна тата ытларах сарма тăрăшаççĕ.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕнче совет делегацийĕ Корейăра вăрçă ĕçĕсене икĕ енчен те халех чарса лартма, тыткăна лекнисене пĕр-пĕрне каялла тавăрса парасси çинчен калаçса килĕшеймен ыйтăва пăхса тухас ĕçе Корея ыйтăвне мирлĕн татса парас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссие пама сĕнчĕ. Совет делегацийĕ сĕннĕ тăрăх США, Англи, Франци, СССР, Китай Халăх Республики, Инди, Бирма, Швейцари, Чехословаки, Демократиллĕ Корея Халăх Республики тата Кăнтăр Корея представителĕсенчен тунă авторитетлă комисси Корея ыйтăвне татса парас тĕлĕшпе малалла пысăк утăм тума пултаратчĕ. Совет Союзĕн сĕнĕвĕ Корея çĕрĕ çинче юн юхтарассине, старриксене, хĕрарăмсене, ача-пăчасене вĕлерессине чарса лартас тĕллев тытать тата вăл мире хÿтĕлекен мĕнпур халăхсен интересĕсемпе килĕшсе тăрать.

Америка делегацийĕ тата ăна пăхăнса тăракан ытти çĕршывсен (Мексика, Перу, Инди) делегацийĕсем хăйсем Корейăри вăрçа чарса лартасшăн мар пулнине тыткăна лекнисене пĕр-пĕрне каялла тавăрса парас ыйтăва татса пама май çук тенипе витме тăрăшнă.

Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕнче Корея ыйтăвĕ тĕлĕшпе законсăр йышăннă резолюци вуншар пин корейцсемпе китаецсене Америкăн тискер тыткăнĕнче хăварма палăртать. Çакă вăл 1940 çулта Женевăра йышăннă конвенцине хирĕç пырать.

Америка империалисчĕсем Корейăра мир тăвассине хирĕç пыни çак сăлтавĕсенчен килет: пĕрремĕшĕнчен, вăрçă вĕсене чи пысăк усламсем илме май парать тата хĕçпăшалсене ÿстермелли сăлтав пулса тăрать; иккĕмĕшĕнчен, ку вăрçă тĕнчери лару-тăрăва çивĕчлетсе пынине пула Америкăшăн вăрçă блокĕнче хăйĕн партнерĕсене пусмăрламалли сăлтав пулса тăрать; виççĕмĕшĕнчен, Америка вăрă-хурахĕсем хăйсен Корейăри авантюрине тĕнчери виççĕмĕш вăрçăн пĕр сыпăкĕ тесе, пысăк çарсем тумалли тата çĕнĕ хĕçпăшалсене сăнаса пăхмалли шкул пулса тăрать, тесе шутлаççĕ.

Анчах та Корейăра мир тума килĕшменнине пула, США-ри ертсе пыракан ушкăнсем, хăйсем агрессорсем пулнине тăрă шыв çине кăларса, политика тĕлĕшĕнчен пĕччен тăрса юлас хăрушă çул çине тăраççĕ. Тепĕр енчен, Корейăри авантюра Америкăн вăрçă стратегийĕ, вăл вăрçа хăвăрт вĕçлеме шутлани тата Америка салтакĕсемпе техники ыттисенчен лайăх тесе шутлани тĕрĕс маррине кăтартса парать, çавăнпа Çурçĕр Атлантика блокне хавшатать.

Америка вăрă-хурахĕсем вăрçăра поражени тÿсни çакăнтан та уççăн курăнать. Америка агрессорĕсем Корея халăхне хирĕç вăрçă пуçланнăранпа икĕ çул çурă ытла иртрĕ пулин те, агрессорсем 38-мĕш параллель патĕнче, хăйсен авантюрине пуçланă вырăнтах, тапăртатса тăраççĕ. Вĕсем пĕтĕм этемлĕх тата пĕтĕм тĕнчери право тăрăх сивленĕ напалмпа, химиллĕ тата бактериллĕ хĕçпăшалпа усă кураççĕ пулин те, малалла нимĕн чухлĕ те каяйман.

Америка тумтирне тăхăннă вăрă-хурах Кларк 1952 çулхи августăн 5-мĕшĕнче Çурçĕр Корейăри 78 хулана бомбăсем пăрахса çĕмĕрсе тăкма приказ панă. Пхеньян хулинчи халăх комитечĕн председателĕ Ким Сон Хак каланă тăрăх, Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем 1952 çулта кăна Демократиллĕ Корея Халăх Республикин столици çине 52.380 бомба, урăхла каласан, хулари кашни тăваткал километр çине пиншер бомба ытла пăрахнă.

Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн ялавĕпе витĕнсе этемлĕхе хирĕç киревсĕр ĕçсем тăвакан Америка вăрă-хурахĕсене тÿрĕ кăмăллă мĕнпур çынсем ылханаççĕ. Вĕсем çынсене массăллăн вĕлерсе пĕтермелли бактериллĕ тата ытти хĕçпăшалсемпе усă курнине, тыткăна лекнĕ корейцсемпе китаецсене Кочжедо, Чечжудо, Понган утравĕсем çинчи тата Пусанри лагерьсенче тискеррĕн вĕлернине пĕтĕм тĕнче умĕнче тăрă шыв çине кăларнă.

* * *

Америка агрессорĕсем темле урса кайса иртĕхеççĕ пулин те, вĕсен ĕçĕ тухас çук. Паттăр Корея халăхĕ хăйне чуралантарма памĕ, мĕншĕн тесен тĕнчери мире юратакан халăхсем пурте ун майлă.

КПСС XIX-мĕш съездĕнче тухса каланă саламлă сăмахра Корейăри Ĕç партийĕн Центральнăй комитечĕн секретарĕ Пак Ден Ай çапла каланă: «Америка империалисчĕсем темле тискерленсен те, Корея халăхĕ тата унăн паттăр Халăх çарĕ, Ĕç партийĕ, хăйсен юратнă çулпуçĕ Ким Ир Сен ертсе пынипе, хаяр тăшмана хирĕç татăклă çĕнтерÿ тума хатĕр тăраççĕ».

Корея халăхне Америка империалисчĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре Китайăн паттăр добровольцĕсем пулăшаççĕ. Япони оккупанчĕсене хирĕç кĕрешнĕ чухнехи пекех, Китай халăхĕпе Корея халăхĕ Америка интервенчĕсене хирĕç пĕрле кĕрешеççĕ. Китай добровольцĕсем Корея çĕршывне хăйсен тăван килне хÿтĕленĕ пекех хÿтĕлеççĕ. Китай халăхĕ хăйĕн добровольцĕсем валли 3.700 самолет тума укçа-тенкĕ пухса панă.

Империалистсем Демократиллĕ Корея Халăх Республикине хирĕç интервенци пуçланнăранпа Корея Халăх çарĕпе Китай добровольцĕсем тăшманăн çĕршер пин салтакĕпе офицерне вĕлернĕ тата тыткăна илнĕ, çар карапĕсем 150 ытла, танксем, самолетсем, тупăсем нумай тытса илнĕ.

Корея халăхĕ тата Китай халăх добровольцĕсем ирĕклĕхшĕн кĕрешеççĕ. «...Англи тата США Китай халăх правительствин мирлĕ сĕнĕвĕсене татăклăнах сирсе ярас пулсан,—терĕ Сталин юлташ 1951 çулхи февральте «Правда» корреспонденчĕпе калаçнă чухне,—Корейăри вăрçă интервентсем поражени тÿснипе çеç вĕçленме пултарать».

Корейăра вăрçă пуçланнăранпах Совет Союзĕпе Китай Халăх Республики çав вăрçа чарассишĕн тимлĕн кĕрешеççĕ. Анчах Америка империалисчĕсем, Корея ыйтăвне мирлĕн татса парассине чăрмантарса тăрса, Корейăпа Китай халăхĕсене хирĕç вăрă-хурахла агрессие малалла тăсса пыраççĕ.

Китай халăхĕ тата Азири ытти халăхсем Корейăри хирĕçÿсене мирлĕн татса пама тăрăшнине палăртса, Мао Цзэ-дун Халăхăн политикăллă консультативнăй Совечĕн Пĕтĕм Китайри комитечĕн сессийĕнче çапла каланă:

«Пире мир кирлĕ. Анчах Америка империализмĕ сăлтавсăр требованисем кăларса тăратма тата агрессие сарса пымалли план çинчен шухăшлама пăрахиччен, Китай халăхĕн пĕртен-пĕр шухăш-кăмăлĕ çакăн пек пулать: Корея халăхĕпе пĕрле малалла кĕрешмелле... Америка империализмĕ темиçе çул хушши вăрçма шутласан та, эпир ăна хирĕç кĕрешме, Америка империализмĕ каялла чакиччченех, Китайпа Корея халăхĕсем пĕтĕмĕшле çĕнтерÿ тăвиччен кĕрешме хатĕр».

Америкăпа Англи империалисчĕсен Азири планĕсем арканса пыраççĕ. Çакна Корея халăхĕ агрессорсене хирĕç паттăррăн кĕрешни тата Китай Халăх Республики тулашрипе шалти политикăра пысăк çитĕнÿсем туни çеç мар, Китайри революци Азипе Африкăри колонисен халăхĕсене пусмăра хирĕç кĕрешме çĕклентерни те уççăн кăтартса парать. Азири, Лăпкă океан тăрăхĕнчи тата колониллĕ пусмăр тÿсекен мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем империалистсене хирĕç кĕрешесси çĕнĕ пусăма çĕкленчĕ. Корейăпа Китай халăхĕсем ирĕклĕхшĕн паттăррăн кĕрешни Инди, Вьетнам, Малайя, Индонези, Бирма, Филиппин, Иран, Египет, Тунис, Марокко тата ытти колонисен халăхĕсемшĕн империалистсен пусмăрне хирĕç мĕнле кĕрешмеллине кăтартакан сутă тĕслĕх пулса тăрать.

Халăхсем миршĕн кĕрешесси анлă сарăлса пырать. Пĕтĕм тĕнчери çирĕп миршĕн тăракан халăхсем Корейăри агрессиллĕ вăрçа чарса лартассине питĕ пысăк вырăна хураççĕ. Çавăнпа та Азири тата Лăпкă океан тăрăхĕнчи 42 çĕршывран Пекина миршĕн тăракансен конгресне пухăннă çынсем, Мире хÿтĕлес тĕлĕшпе 1952 çулхи декабрьте Венăри конгреса пынă çĕр ытла халăхсен представителĕсем пăхса тухнă ыйтусем хушшинче Корейăри вăрçа чарса лартас ыйту питĕ пысăк вырăн йышăннă. Мире юратакан мĕнпур халăхсен шухăш-кăмăлне палăртса, Венăри конгресс Корейăри вăрçă ĕçĕсене пĕр тăхтаса тăмасăр чарса лартма хушса резолюци йышăннă.

Пĕтĕм тĕнчери миллионшар çынсем Корея ыйтăвне мирлĕн татса парассишĕн тăраççĕ. Америкăпа Англи империалисчĕсем çакна шута илсе мирлĕ сĕнÿсене йышăнмасан, Корейăри вăрçă интервенчĕсем поражени тÿснипе çеç вĕçленме пултарать.

Г. ЧАВКА,
истори наукисен кандидачĕ.

Чехословаки республикин президенчĕпе Коммунистсен партийĕн председательне Клемент Готвальда пытарас умĕн

ПРАГА, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Чехословаки республикин президенчĕпе Коммунистсен партийĕн председательне Клемент Готвальда кĕçнерникун, мартăн 19-мĕшĕнче, кăнтăрла 13 сехетре пытараççĕ.

Клемент Готвальд ÿтне хунă тупăка Прага Кремлĕн Испански залне вырнаçтарса лартаççĕ, унта çынсене паянтан, мартăн 16-мĕшĕнчен кĕртме пуçлаççĕ.

Кĕçнерникун, 1953 çулхи мартăн 19-мĕшĕнче, шăп 13 сехетре, мĕнпур ĕç участокĕсенче 5 минутлăха ĕçсене чарса лартаççĕ, çак вăхăт хушшинех республикăри мĕнпур транспорт ĕçĕ чарăнса ларать. Çакăнпа пĕр вăхăтрах предприятисем, пăравуссем тата пăрахутсем 5 минут хушши кăшкăртса юлашки хут Чехословаки халăхĕн çулпуçне чыс тăваççĕ.

Чехословакири ĕççыннисем хăйсен çулпуçĕпе сывпуллашаççĕ

ПРАГА, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Прага Кремлĕнчи Испански текен пысăк зал. Люстрăсене, кантăксене, тĕкĕрсене, ылтăнпа ерешлесе тунă стенасене хура пурçăнпа карса хунă. Çÿлĕ вырăна Чехословаки республики президенчĕн Клемент Готвальдăн ÿтне хунă тупăка вырнаçтарса лартнă.

Ирхине 11 сехет. Пытару маршĕн хурлăхлă кĕвви янрать. Правительство членĕсем, премьер-министр А. Запотоцкипе пĕрле, Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членĕсем, Наци пухăвĕн представителĕсем, Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсен дипломатиллĕ представителĕсем вăраххăн утса зала пырса кĕреççĕ. Вĕсем тупăк патне пыраççĕ те чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Клемент Готвальд тупăкра Чехословаки çарĕн Верховнăй Главнокомандующийĕн формипе выртать.

Малтанхи чечек кăшăлĕсене Чехословаки правительствипе Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен, Совет Союзĕн Чехословакири Посольствинчен тата Совет Союзĕн Чехословакири çар атташинчен хунă. Вĕсем хыççăн Польша, Китай Халăх Республики, Румыни, Болгари, Венгри, Демократиллĕ Корея Халăх Республики, Албани дипломатиллĕ представителĕсем, кĕрешĕвĕн Наци фрончĕн Центральнăй Комитетĕнчен, Наци пухăвĕнчен, Чехословаки çарĕнчен, наци хăрушсăрлăх министерствинчен, Прага хулинчи ĕççыннисенчен, Профсоюзсен центральнăй советĕнчен, Чехословакири çамрăксен союзĕн Центральнăй Комитетĕнчен, Чехословакипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществинчен чечек кăшăлĕсем хунă.

Республика президенчĕ Клемент Готвальд тупăкĕ умне хисеплĕ хурала унăн соратникĕсем, Чехословакири Коммунистсен партийĕн Политикăллă секретариачĕн членĕсем Антонин Запотоцкий, Вилем Широкий, Яромир Доланский, Карел Бацилек, Алексей Чепичка, Вацлав Копецкий, Антонин Новотный тăраççĕ. Зала хăйсен çулпуçĕпе сывпуллашма килнĕ ĕççыннисем пырса кĕреççĕ. Тупăк умĕнчен рабочисем, служащисем, студентсем, кил хуçи хĕрарăмĕсем иртеççĕ. Вĕсем тупăк умне тирпейлĕн чечек кăшăлĕсем хураççĕ те куçĕсене илмесĕр хăйсемшĕн хаклă та паллакан çын пичĕ çине пăхса тăраççĕ.

Прага Кремлĕ çывăхĕнчи мĕнпур урамсем хушшине халăх тулса ларнă. Ĕççыннисен делегацийĕсем хăйсен çулпуçне юлашки хут чыс тума пыраççĕ. Вĕсен пичĕсем хурлăхлă, анчах çак çынсен чĕрисенче Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, Совет Союзĕ пулăшнипе хăйсен çĕршывĕнче социализм тăвасса çирĕппĕн шанса тăни курăнать.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ мартăн 16-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче фронтăн икĕ участокĕнче Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсен разведка отрячĕсем хушшинче пĕчĕк тытăçусем пулса иртнĕ.

Зенитнăй чаçсемпе тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ.

Америка агрессорĕсем Корейăра çаплах бактерисемпе усă курса вăрçă вăрçаççĕ

ПХЕНЬЯН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Корея хаçачĕсем Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Унта Америка интервенчĕсем Корейăра çаплах бактерисемпе усă курса вăрçă вăрçни çинчен каланă. Вонсан хулинчен илнĕ пĕлтерÿре çапла каланă: мартăн 2-мĕшĕнче ирхине 5 сехетре Америкăн икĕ самолечĕ пĕр ял çине чир ертнĕ хурт-кăпшанкăсем пăрахнă. Унта дезинфекци туса иртнерĕ. Канвон провинцийĕнчи тĕрлĕ ялсем çине Америка агрессорĕсем самолетсем çинчен чир саракан хурт-кăпшанкăсем пĕтĕмпе 12 хутчен пăрахнă. Хвеян уездĕнче вĕсем çавнашкал 16 йышши тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсем—шăнасем, эрешменсем, сăвăссем, пăрçасем пăрахса хăварнă.

Кэсонри нейтральнăй зонăра Америка çĕнĕрен провокаци тунă

ПЕКИН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран мартăн 14-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Америка самолечĕсем мартăн 13-мĕшĕнче 5 сехет те 40 минут тĕлнелле Кэсон хулин центральнăй районĕ çине тапăннă. Виççĕ çынна амантнă, нумай çуртсене ишĕлтернĕ. Корейăпа Китай енĕ малтанлăха тĕрĕслесе тухни çакна кăтартнă: пĕтĕмпе пурĕ 20 бомба ытла пăрахнă, хăшпĕр бомбăсем халĕ те çурăлман.

Икĕ енĕн çыхăну офицерĕсен çав кунах кăнтăрла пулса иртнĕ канашлăвĕнче Корейăпа Китай енĕн çыхăну аслă офицерĕ полковник Чжу Янь çак ĕç пирки американецсене протест панă, çакă вăл халиччен йышăннă килĕшĕве пăсни пулать, тенĕ. Килĕшÿсене çавăн пек пĕрмай пăсни вăл—ĕçсене йывăрлатса çитересси патне илсе пыма пултарнине Америка енĕн ăнланас пулать, тенĕ полковник Чжу Янь.

Америка енĕн çыхăну аслă офицерĕ Кэрлок: Америкăн тивĕçлĕ влаçĕсемпе çыхăнăп, çак ĕçе пĕрле тĕрĕслесе мартăн 14-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен пăхма Кэсона килĕп, тесе пĕлтернĕ.

Юлашки вăхăтра американецсем перемири çинчен пыракан калаçусем тĕлĕшпе йышăннă тĕрлĕ администрациллĕ килĕшÿсене тăтăшах пăсаççĕ, конференци районĕнче тата нейтральнăй зонăра çĕнĕрен те çĕнĕ провокацисем тăваççĕ. Американецсем конференци районĕнче пĕр çуртă вут тивертнĕ, Корейăпа Китай енĕн çар полицейскине амантнă, çак район çине темиçе хутчен те пенĕ. Америка самолечĕсем конференци иртмелли район çине пĕр хут çеç мар вĕççе пынă, Кэсонри нейтральнăй зона тĕлĕнче кăнтăрла та, каçхине те разведка тунă, Кэсонăн центральнăй районĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Американецсен çак ирсĕр ĕçĕсем вĕсем американецсем калаçусене татăклăнах чарса лартас тĕллевпе конференци районĕ тата нейтральнăй зона çинчен йышăннă килĕшĕве юри пăсни çинчен калаççĕ. Корейăпа Китай енĕн çыхăну аслă офицерĕ çапла каланă: американецсем перемири çинчен пыракан калаçăва татăклăнах чарса лартас тĕллевпе конференци районĕ тата нейтральнăй зона çинчен йышăннă килĕшĕве пĕтерме шут тытнă пулсан, çакăн çинчен вĕсен уççăн калас пулать тата пĕтĕм ответлăха хăйсем çине илес пулать, тенĕ.

Пĕчĕк колхозсем пĕрлешнĕ

СОВЕТСКИ. «Авангард», «Прогресс» тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем пĕр колхоза пĕрлешме йышăнчĕç.

Пĕрлешсе пысăкланнă колхозăн акмалли çĕр лаптăкĕ 1.200 гектара çитет, обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕ те пысăк.

Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ пĕрлешсе пысăкланнă колхоза «Герой» ят пачĕ. Колхозниксем правленин çĕнĕ составне тырпул тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне тăтăшах ÿстерсе пымалли, обществăллă хуçалăха аталантармалли пур майсемпе те туллин усă курма хушса хăварчĕç.

В. ПЕТРОВ.

* * *

ЕЛЧĔК. Иртнĕ вăхăтра районта 64 колхоз пулнă. Пĕчĕк колхозсем пĕрлешсе пысăкланнă хыççăн 31 колхоз юлчĕ. Юлашки вăхăтра Пушкин ячĕпе тăракан, «Красный партизан» тата «Комбайн» колхозсем пĕрлешрĕç.

И. НЯГИН.

Строительство валли—йывăç

КАЛИНИНО. «Волга» колхоз кашни çулах обществăллă çуртсем нумай тăвать. Иртнĕ çулта тимĕрçĕ лаççи, лаша вити, пушар сарайĕ лартнă.

Колхоз кăçал та çĕнĕ çуртсем тума вăрман нумай касса хатĕрлерĕ. Кăçал çил арманĕ, ĕне вити тата стандартлă зернохранилище тума йышăннă. Çак кунсенче ĕне вити тума тытăнчĕç. Çĕнĕ стройка валли халĕ кашни кунах йывăç турттараççĕ.

В. АНИСИМОВ.

Государствăна—выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем

ТĂВАЙ. Районти колхозсем государствăна аш-какай памалли пĕрремĕш кварталти плана срокчен пĕр уйăх маларах тултарчĕç. Халĕ иккĕмĕшпе виççĕмĕш кварталшăн аш-какай параççĕ.

ВĂРНАР. Районти колхозсем кăçалхи икĕ уйăхра сĕт-çу памалли плана 105,3 процент тултарнă.

План тума пулăшрĕç

ÇĔРПУ. Районти колхозсенче производствăллă плансем тăваççĕ. Пур йышши культурăсене те пусă çавранăшĕнче пĕлсе вырнаçтарнинчен, тырпул тухăçлăхĕ ÿссе пырасси нумай килет. Паллах ĕнтĕ, производствăллă плана пĕлсе, пысăк тимлĕхпе туни колхоз пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать.

Çĕрпÿри ялхуçалăх техникумĕнчи IV-мĕш курсра вĕренекенсем Çĕрпÿ районĕнчи «Большевик», «Сталинцы», «Красный Октябрь», «Цивильстрой», Мичурин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те производствăллă плансем тума пулăшрĕç.

Г. ПАВЛОВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ ШАШКА ЧЕМПИОНАЧĔ ВĔÇЛЕНЧĔ

Вăрнарта шашкăлла выляса республикăра мала тухассишĕн пынă XIV-мĕш чемпионат вĕçленчĕ. Турнирта республикăри чи вăйлă 14 шашист хутшăнса выляррĕç. Пĕрремĕш разрядри И. Ижеев шашист (Шупашкар) пĕрремĕш вырăна тухса, шашка енĕпе республика чемпионĕ ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Вăл 13 очко илме май пур çĕртен 10,5 очко пухнă. Иккĕмĕш вырăна çамрăк шашист Фомин (Улатăр) йышăнчĕ. Унăн—10 очко. Семенов (Улатăр) тата Я. Романов (Канаш районĕ), 9-шар очко пухса, виççĕмĕшпе тăваттăмĕш вырăнсене тухрĕç. Республикăн иртнĕ çулхи чемпионĕ Егоров пиллĕкмĕш вырăн йышăнчĕ. Унăн—8,5 очко. Глазковăн (Комсомольски районĕ) тата Антоновăн (Вăрнар районĕ)—7-шер очко. Ытти вырăнсене Васильев (Калинино районĕ), Персов (Шупашкар хули), Андреев (Çĕрпÿ районĕ), Кротов (Чкаловски районĕ), Кузьмин (Шупашкар хули), Аврамов (Первомайски районĕ) тата Г. Романов (Вăрнар районĕ) йышăннă.

Ижеевпа Фомина хаклă парне тата диплом панă.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Венгрире 1848 çулта революци пулнăранпа 105 çул тултарнă

БУДАПЕШТ, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Венгрире 1848 çулта революци пулнăранпа 105 çул тултарнине палăртнă. Çак революцин геройĕн — Шандор Петефи поэтăн памятникĕ умне Венгрири ĕççыннисен партийĕнчен, Министрсен Советĕнчен тата обществăллă организацисенчен чечек кăшăлĕсем хунă.

Наци музейĕ умĕнче ĕççыннисен митингĕ пулнă. Митингсем çавăн пекех çĕршыври ытти хуласенче те пулса иртеççĕ.

Бонпа Парижра алă пуснă çар договорĕсене хирĕç

БЕРЛИН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Майн çинчи Франкфуртран пĕлтернĕ тăрăх, вырăнта Бонпа Парижра алă пуснă çар договорĕсене хирĕç, Аденауэр режимне хирĕç, Хĕвеланăç Германие фашизацилессине хирĕç пĕрле кĕрешме чĕнсе калакан социал-демократсен деятелĕсен шучĕ ÿссе пырать.

Социал-демократсем рабочи класс представителĕсем пĕрле кĕрешсе Золингенра, Кернеира, Кассельре тата ытти вырăнсенче те реакцие çĕнтерни çинчен калаçса параççĕ.

Германири Социал-демократсен партийĕн Майн çинчи Франкфуртри район правленийĕн председателĕ Людвиг Шмидт çапла каланă:

Золинген пĕр пĕччен пулмалла мар. Мĕнпур рабочисем пĕрле кĕрешсен кăна çак юлашки сехетсенче çар договорĕсене пурнăçлассине чăрмантарма пулать.

Çынсем пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ пур вырăнсенче те реакци хăйĕн шăткăне пытанать.

КИНО

«РОДИНА»—мартăн 18-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче **«Оборона Царицына»**, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче фильм-спектакль **«Горячее сердце»**.

«УДАРНИК»—мартăн 18-мĕшĕнче **«Выборгская сторона»**.

«ЭЛЕКТРИК» — мартăн 18-мĕшĕнче фильм-спектакль **«Горячее сердце»**.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—мартăн 18-мĕшĕнче чăвашла спектакль **«Айдар»**. Мартăн 19-мĕшĕнче чăвашла спектакль **«Виçĕ туй»**. Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

СССР ХАЛĂХ ХУÇАЛĂХНЕ АТАЛАНТАРМАЛЛИ ГОСУДАРСТВЕННĂЙ ЗАЕМ (1951 ÇУЛХИ КĂЛАРĂМ) ÇЫРАНСА ИЛНĔ ГРАЖДАНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

1953 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1951 çулхи кăларăм) облигацийĕсене подписчиксене памалли срок тухать.

Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисемпе государство кредичĕн управленийĕ подписчиксене çакăн çинчен пĕлтерет: перекет кассисем СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заем (1951 çулхи кăларăм) облигацийĕсене подписчиксене 1953 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен параççĕ.

Подписчиксем кăтартнă срокчен облигацисене алла илмесен, вара илмесĕр юлаççĕ.

Чăваш АССР перекет кассисемпе государство кредичĕн управленийĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01039 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.